[illegible library stamp] ... им. Горького 0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АВГУСТ 2 ЫТЛАРИКУН 176 (4989) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АСС Республикин Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Фашисăм—вăл вăрçă! Социалисăм—вăл мир!

Тĕнчери империалисăмла вăрçă пуçланнă кунранпа пайан 24 çул тултарать, вăл вăрçă етемлĕх историнче чи хăрушă вăрçă пулнă, ăна империалисăмла державăсем капитал магначĕсен интересĕсемшĕн тĕнчене пайласа тухас шутпа пуçласа йанă. Тăватă çул хушши пынă çак йунлă вăрçăн хăрушлăхĕсемпе инкекĕсем халăх массисен ăсĕнче халĕ те чĕрех тăраççĕ-ха.

1914—18 çулсенчи империалисăмлă вăрçă империалисăм çиçтемине тĕпренех кисрентерчĕ тата рабочи класăн социалисăмшăн пыракан револуцилĕ çапăçăвĕсене нумай хăвăртлатрĕ. Пирĕн çĕршыври халăхсем Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе помещиксемпе капиталиссен влаçне çĕклесе çапрĕç те, аслă та хăватлă социалисăмлă держава туса хучĕç. Çĕр чăмăрĕн пĕр [illegible] тамĕш пайĕнче çĕнĕ тĕнчен, социалисăм тĕнчин вучĕсем йалкăшма пуçларĕç. Çĕршыв ăшĕнчи тата çĕршыв тулашĕнчи хирĕçÿсемпе хавшаса пыракан капиталисăмлă тĕнче, ĕççыннисене пусмăрламали, çынна çын експлоатацилемели тĕнче пĕр чарăнусăр тата ниçта пăркаланмасăр çĕнĕ йунлă кисренÿсем патне пырать.

Капиталисăмла тĕнче пĕр кризисран тепĕр кирризис патне, пĕр вăрçăран тепĕр вăрçă патне пырать. Империалисăмлă державăсем хушшинчи хутшăнусем пихçанхи пек те мар çивĕчленсе çитнĕ. Халĕ ĕнтĕ, „йулашки вăрçă" пуçланнă хыççăн 24 çултан, пĕр-пĕринпе кĕвĕçсе тупăшакан группировкасем хушшинчи кирек мĕнле тавлашу та пĕтĕм тĕнчери тытăçăва çитĕнсе кĕрес хăрушлăхпа хăратса тăрать, çав тытăçу 1914—18 çулсенчи империалисăмлă вăрçăранта вăйлăрах пулать. „Еç çĕнĕ империалисăмла вăрçă патне, халĕхи лару-тăруран тухмали май тесе шутлакан вăрçă патне пырать" (Сталин).

Виçĕ çĕршывра фашисла агрессăрсен вăрăхурăхла блокĕ халĕхи вăхăтра çĕнĕ вăрçă чĕртсе йарать, Рим—Берлин—Токио тĕнелĕ виçĕ континент çинче—Йевропăра, Африкăра тата Азире вăрçă пушарне вĕрсе чĕртет. Испани халăхне хирĕç Италипе Германи пуçласа йанă вăрçă икĕ çул хушши тăсăлать ĕнтĕ, империалисăмлă Йапони çулталăк ытла ĕнтĕ Китайа хирĕç вăрçать, Абиссинире пăшал пенĕ сасăсем халĕ те чарăнман-ха. Анчах агрессăрсен блокĕ етемлĕхĕн пĕр виççĕмĕш пайне вăрçа сĕтĕрсе кĕртнĕскер, тĕп тĕллевшĕн тăрăшать—хăйĕн йут çĕрсене туртса илмели планĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тĕнче вăрçине пуçласа йарасшăн тăрăшать.

Германи фашисăмĕ Австрине тытса илни, Чехословаки çине тапăнма хатĕрленни, фашисла пиратсем Вăтаçĕр тинесĕнче пĕр чарусăр вăрă-хурахланни, Италипе Германи интервенчĕсен авиацийĕ Франци территорийĕ çине бомбăсем пăрахни—çаксем пурте фашисла блок пурнăçа кĕртсе пыракан агреççилĕ актăсемпе провокацисен сыпăкĕсем пулса тăраççĕ. „Рим—Берлин—Токио" тĕнелĕн çаратулă плансен тĕп пайĕ—фашисла агрессăрсем ăнсăртран тапăнма хатĕрленекен çĕршывсен тылне шпионсем, провокатăрсем, диверсантсем тата çынвĕлерекенсем йани пулса тăрать. Фашисăмăн троцкисла тарçисем, кагуларсем, генлейновецсем, франкистсем, изменниксемпе предателсем—вĕсем пурте усал çĕлен-калтасен ирсĕр ăмăрккине çыхланса çăмха пулчĕç, вĕсене ĕççыннисен чи чарусăр та усал тăшманĕсем—Германин, Италин тата Йапонин фашисла пуçлăхĕсем тăрантарса пăхса ÿстерне.

Фашисла агрессăрсен блокĕ хăйĕн планĕсене пурнăçа кĕртес çĕрте шпионла агентурăна хĕçпăшаллă вăйсенчен кайах шутламасть. Фашисла вăрă-хурахсем тĕллесе хунă çĕршыв çине тапăнма хăйсен уйрăм тактикине шухăпласа кăларнă: кĕтесрен вăрттăн пырса çапни, диверсисем, террор, хăратни, провокацисем. Фашисла агрессăрсем вăрçă пуçланни çинчен пĕлтерме кирлĕ мар тесе шутлаççĕ. Империалисăмла Йапони 1931 çулта Китай çине тапăннинчен пуçласа, капиталисăмлă тĕнче йеркипенех вăрçа шăвăнса кĕме тытăнчĕ. Çак çĕнĕ тĕнче вăрçине шăвăнса кĕрес процес агреççăрсен виçĕ çĕршыв блокĕ пулса тăнă хыççăн татах вăйланчĕ.

Шăвах халĕхи лару-тăрура ĕнтĕ, чи пысăк хăрушлăхсем умĕнче тăракан лару-тăрура, тĕнчери мĕн пур çынсĕн, фашисăма хирĕç тăракан мĕн пур çынсен задачи вăл—фашисла çынçийекенсен интригĕсемпе ĕмĕчĕсене тăрă шыв çине кăларасси пулса тăрать. Шăпах çак кунсенче ĕнтĕ Ленинăн сăмахĕсем пысăкран та пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ: „Çынсене чăн-чăн обстановкă çинчен, вăрçă çуралса тухакан вăрттăнлăх йепле пысăкки çинчен ăнлантарса памала..." Вăрçă чĕртсе йаракансен преступленилĕ махинацийĕсене тата вĕсем майла тăракансене тăрă шыв çине кăларасси чи малтанах сыхлăхлă пулма, тăшмана, унăн меттачĕсене, унăн тактикине, унăн вăрттăн та чейе ĕçĕсене пĕлме хушать.

Пĕтĕм тĕнчери халăх массисем фашисла варварсем çине таса курайманлăхпа тарăхаççĕ. Вăрçă тата фашисăм хăрушлăхĕ ĕççыннисем йăвăр кĕрешÿре çĕнсе илнĕ миршĕн, демократипе правасене сыхласа хăварассишĕн халăхсен хăватлă йухăмне пуçласа йачĕ. Буржуазин реакцилĕ елеменчĕсем фашисла вăрçă чĕртсе йаракансемпе тÿррех калаçса татăлассăн тăрăшаççĕ. Халăх массисем, малта пыракан мыслителсем, ученăйсем—мĕн пур паллă çынсем миршĕн тăраççĕ, фашисăма хирĕçле сарлака халăх фрончĕн йалавĕ айне пĕтĕçеççĕ.

Халăх фрончĕ Испанине фашисла колонилĕ чуралăхран хăтарчĕ. Пĕрлĕхлĕ наци фрончĕ Китай халăхне хăй никама пăхăнмасăр ирĕклĕ пурăнассишĕн Йапони агрессăрĕсене хирĕç кĕрешме хăватлă вăй пачĕ. Халăх фрончĕ Францири влаçа реакци пырас çула картласа тăрать. Халăх фрончĕн вăйĕсем англире те ÿссе пыраççĕ. Америкăн Пĕрлешÿлĕ Штачĕсенче демократилĕ анлă фронт тăвассишĕн хăватлă йухăм сарăлса пырать. Чехословакинчи халăх массисем пĕтĕçни республикă çине Германи фашисăмĕ тапăнассинчен хÿтлеме чылай çĕрте халăх фрончĕ организацилесси патне илсе пычĕ. Центрти тата Кăнтăрти Америкăн çĕршывĕнче вăрçа хирĕçле тата фашисăма хирĕçле йухăм чăннипех пĕтĕм халăх йухăмĕ пулса тăрать. Халăхсен çак хăватлă йухăмĕн пуçĕнче Совет Сойузĕ рабочисемпе хресченсен социалисăмла аслă государстви тăрать, вăл миршĕн, фашисăма хирĕç кĕрешекен мĕн пур бойецсен шанчăкĕпе тĕрекĕ шутланать. Совет Сойузĕ—пĕтĕм тĕнчери мирлĕ пурнăçăн аслăран та аслă тĕрекĕ. Çавăнпа та ăна мĕн пур ĕççыннисем хĕрÿлĕн йуратаççĕ. Совет Сойузĕн тăшманĕсем—фашисла агрессăрсем тата вĕсен ылханлă троцкисла агенчĕсем—вĕсем пĕтĕм халăхсен тăшманĕсем, етемлĕхĕн чи усал тăшманĕсем. Совет патриочĕсене, хăйсен тăван çĕршывне йуратакан патриотсене ленинла-сталинла интернационалисăм шухăшĕпе вĕрентсе ÿстерне. Вĕсем пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисемпе туслă çыхăну тытассине вăйлатса пыраççĕ.

Совет Сойузĕ фашисла вăрçă чĕртсе йаракансене хирĕç вĕçне çити йĕх тата пĕр пăркаланмасăр кĕрешсе пырать. Фашисла агрессăрсен ĕмĕчĕсене вăл сталинла, çирĕппĕн тăрă шыв çине кăларса пырать, вĕсен планĕсене пăтраштарса йарать тата вĕсен провокацийĕсене пĕр хĕрхенÿсĕр отпор парать. Миршĕн пыракан çак аслă кĕрешÿре Совет Сойузне мĕн пур малта пыракан етемлĕх пулăшса тăрать.

Агрессăрсен виçĕ çĕршыв блокĕ вăрçă чĕртсе йама хăтланнине пула пĕтĕм тĕнчери лару-тăру ытларах та ытларах çивчĕленсе пырать. Фашисла генералнăй штабсем, тĕнчипе çĕнĕ вăрçă пуçласа йама тăрăшса, Совет Сойузĕ çине тапăнма тимлĕн хатĕрленеççĕ, çĕнĕрен те çĕнĕ провокацисем тăваççĕ. Пит те пысăк сыхăлăхла пулни кирлĕ. Сталин йулташ партийă задачăна тĕрĕс тата ырми-канми пурнăçа кĕртсе пырасси кашни парти организацин аслăран та аслă задачи пулмала:

„Хамăрăн Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ Флота, Хĕрлĕ авиацине, Осоавиахима пур майсемпе те вăйлатни тата тĕреклетни кирлĕ. Ниçĕнле „ăнсăртлăх" та тата пирĕн тулти тăшмансен ниçĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен пырса ан тивччĕр, тесе хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилле хатĕр тытса тăмала..."

Фашисла вăрă-хурахсем Совет Сойузĕнчи халăхсене кĕтмен çĕртен пырса тивме пултараймĕç! Çапăнта ĕнтĕ агрессăрсен блокĕн совета хирĕçле ĕмĕчĕсене арпатса тăкмалли гаранти. Империалисăмлă вăрă-хурахсем социалисăм çĕршывĕ çине пĕррремĕш хут тапăнса пăхма хăтланнăнах, вĕсене хăйсен территорийĕ çинчех çĕмĕрсе тăкаççĕ.

(„Правда" хаçатĕнчен)

1938 çулти йиулĕн 24-мĕшĕнче физкултура парачĕ пулса иртнĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран): Л. М. Каганович, К.Е. Ворошилăв, И.В. Сталин, А.А. Андрейĕв, В. М. Молăтăв тата М. И. Калинин йулташсем парадра пулнисене саламлаççĕ.

Ф. Кислов фото ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

СТАЛИН ЙУЛТАША

Хаклă, тăван Иосиф Виссарионăвич!

Епĕр, Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕсем, Сире, хаклă Иосиф Виссарионăвич, ĕççынни массисен çулпуçне, социалисăм çĕнтерĕвĕсен аслăран та аслă организатăрне, тĕнчере чи демократилĕ социалисăмлă Конституци туса паракана, болшевикла хĕрÿлĕ салам йаратпăр.

Пирĕн республикăн аслă органĕнче Есĕр, хаклă Иосиф Виссарионăвич, пĕрремĕш депутатра тăнипе епĕр телейлĕ те мухтавлă. Есĕр ăста йертсе пынипе çĕрĕн ултă пайĕнчен пĕринче социалисăм çĕнтерчĕ, пирĕн тăван çĕршыври ĕççыннисене есĕр телейлĕ те савăнăçлă пурнăç патне илсе килтĕр, пирĕн тăван çĕршыва коммунисăм патне хăйулăн илсе пыратăр. Пирĕн республикăн аслă органĕнче сирĕн çывăх соратниксем—Молăтăв, Ворошилăв, Калинин, Каганович, Жданăв, Йежов, Микойан тата Андрейĕв йулташсем депутатра тăнипе епĕр телейлĕ те мухтавлă.

Есĕр ăста йертсе пынипе Чăваш республикĕ ĕлĕк кайа йулнă тĕттĕм çĕршывран халĕ аталанса пыракан социалисăмлă промышлĕннăçлă, коллективлă йалхуçалăхлă, хут пĕлекен, културалă, малта пыракан республикăсенчен пĕри пулса тăчĕ. ССР Сойузĕнчи халăхсен тăванлă туслăхне никам та çĕнтереймĕ. Аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе, болшевиксен партийĕ йертсе пынипе, Есĕр, хаклă Сталин, хăвăр йертсе пынипе çĕнсе илнĕ чăваш халăхĕн телейне, савăнăçне тата ирĕкне никам та туртса илеймĕ.

Есĕр Чăваш халăхне пысăкран та пысăк чыс хуни, шанни—пире коммунистсемпе партире тăманнисен блокне çирĕплетессишĕн, аслă Совет Сойузĕнчи халăхсен сталинла туслăхне çирĕплетессишĕн тата лайăхрах кĕрешме, социалисăмла промышлĕннăçа, йалхуçалăхне, формă йенчен национальлĕ, содержани тĕлĕшĕнчен социалисăмлă културăна малашне аталантарса пырассишĕн ырма пĕлмесĕр болшевикла ĕçлеме хушать.

Чăваш халăхĕн чи лайăх представителĕсенчен, Ленин—Сталин партийĕ вĕрентсе çитĕнтĕрнĕ çынсенчен епĕр орденлă республикăри халăхăн чăн-чăн социалисăмлă правителствине туса хутăмăр.

Епĕр Сире болшевикла сăмах паратпăр: болшевикла критикăпа самокритикăна сарлакан сарса пырса, республикăри советпа хуçалăх организацисен ĕçĕнчи ситменлĕхсене тĕппипех пĕтерĕпĕр, револуцилĕ сисĕмлĕхе татах та ÿлерех çĕклĕпĕр, халăх тăшманĕсене—фашиссен агенчĕсене—сылтăмла-троцкисла, буржуалă-националисла ирсĕр кайашсене тĕппипех пĕтерĕпĕр.

Епĕр пирĕн çĕршывăн оборонă тĕрекне çирĕплетес, республикăри ĕççыннисене совет патриочĕсем пулма, социалисăмла тăван çĕршыва йуратма вĕрентес тĕлĕшпе татах та вăйлăрах ĕçлĕпĕр.

Сире, хаклă Иосиф Виссарионăвич, есĕр пире панă пысăк шанăçа тÿрре кăларас тесе, пĕтĕм вăйран тăрăшма сăмах паратпăр.

Сывă пултăр коммунистсемпе партире тăманнисен никам çĕнтерейми Сталинла блокĕ!

Сывă пултăр никам çĕнтерейми Ленин—Сталин партийĕ!

Сывă пултăр ССР Сойузĕнчи халăхсен сталинла туслăхĕ!

Сывă пултăр пĕтĕм халăхăн пирвайхи депутачĕ, пирĕн атте, учителĕ, тус, тăван çулпуç—Иосиф Виссарионăвич Сталин!

Мускав, Кремль

Молăтăв, Калинин, Ворошилăв, Каганович, Жданăв, Йежов, Андрейĕв, Микойан йулташсене

Епĕр, Чăваш халăхĕ суйланă депутатсем, Чăвашсен Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикăн Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш Çессийне пухăннăскерсем, сирен пата, етемлĕхĕн генилĕ çулпуçĕн—Ленинпа Сталинăн çывăх соратникĕсем патне, государствăн паллă деятелĕсем тата Чăвашсен Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Совечĕн депутачĕсем патне болшевикла хĕрÿлĕ салам йаратпăр.

1938 çулхи йиулĕн 26-мĕшĕ Чăваш халăхĕн историне питĕ паллă кун пулса кĕрет, вăл куна орденлă Чăваш республикĕнчи ĕççыннисем нихçан та манмĕç. Чăваш халăхне çак кун хăйĕн ĕмĕрĕнче пуçласа Российă Федерацин Верховнăй органне суйланипе пĕрлех хăйĕн социалисăмла Парламентне суйларĕ. Чăваш халăхĕ çĕр чăмăрĕ çинчи пусмăрти халăхсене çутă çул кăтартакан, Сталинла аслă Конституцие тăвакан, халăхсен çулпуçĕ, тусĕ тата учителĕ Иосиф Виссарионăвич Сталиншăн тата унăн çывăх соратникĕсемшĕн, Сирĕншĕн, Молăтăв, Каганович, Калинин, Ворошилăв, Андрейĕв Микойан, Жданăв тата Йежов йулташсемшĕн, коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн пĕр кăмăлла пулса сасăларĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ ĕçе тытăнчĕ. Епĕр, депутатсем, Чăваш халăхĕ шанăçне пĕтĕмпех пурнăçлатпăр, унăн ирĕкне пурнăçласа пыратпăр, хамăрăн мĕн пур вăйа илемлĕ тăван çĕршыва чечеклентерсе пырас ĕçе хуратпăр.

Сывă пултăр социалисăм çĕнтерĕвĕсен организатăрĕ, Чăваш халăхĕн пĕрремĕш депутачĕ Аслă Сталин!

Сывă пултăр вăйлă Совет Государствин Правителстви!

Сывă пултăр хăватлă, никам çĕнтерейми Ленин—Сталин партийĕ!

Государствăн вăрлăх кĕнеки

Колхозсемпе совхозсене, районсенчи вăрлăх хуçалăхĕсенче пыракан суртлă вăрлăхсене тĕрĕс тата йаланах учота илсе тăрас тесе, ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ кашни районра государствăн вăрлăх кĕнекине тăвать. Вăл кĕнеке çине колхозсемпе совхозсен вăрлăх участкисенче тĕштырă културисен сурчĕсем мĕнле çĕвелĕсе пынине кăтартакан сведенисем çырмалла.

Государствăн вăрлăх кĕнекисене районри çĕрĕç пайĕ çырса пымалла. Унта кашни хуçалăх тăрăх уйрăмăн çырмалли районри çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕпе аслă агроном тата вăрлăх килĕ колхоз председателĕ йе совхоз директорĕ йĕркелеççĕ.

(ТАСС)

Чукунçул транспăрчĕн Пĕтĕм Сойузри кунĕ

Чукунçул работникĕсен чаплă пухăвĕ

Л. М. Каганович йулташ тухса калани

Йиулĕн 30-мĕшĕнче Мускаври парксенче ĕççыннисем чукунçул транспăрчĕн Пĕтĕм Сойузри кунне уйавланă.

Мускав чукунçул узелĕн работникĕсем 15 пин çын хăйсен çемйисемпе пĕрле, столицăри предприйатисенчи рабочисемпе служăщисем Горький йачĕпе тăракан културăпа кану Тĕп паркĕн Зеленый Театрне, чукунçул транспăрчĕн Пĕтĕм Сойузри кунĕ йачĕпе пуханнă чаплă пухăва пуçтаранна.

Нумайччен хĕрÿлĕн алă çупса чаплă президиума Сталин, Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Андрейĕв, Микойан, Жданăв, Йежов, Хрущчов, Димитров, Телман, Хозе Диас йулташсене суйлаççĕ.

Пухăннă çынсем сталинла Халăх Комиссарне Л. М. Каганович йулташа тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ, вăл пысăк сăмах тухса калать.

Сталинла халăх комиссарĕн уçă та нумай фактсемлĕ сăмахĕ вăхăтĕнче час-часах тăвăллăн алă çупаççĕ. Каганович йулташ транспăрт работникĕсен çĕнтерĕвĕсене хавхалантарса пыраканăн—аслă Сталинăн йатне каласан овацисем çĕнĕ вăйпа кĕрлесе кайаççĕ.

Чукунçул работникĕсене Мускаври ĕççыннисен делегацийĕ тата Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн делегацийĕ саламлаççĕ.

Совет Сойузĕн Геройне Чкалăв комбрига ăшшăн кĕтсе илеççĕ. Чкалăв йулташ сăмах тухса калаcа, чукунçул работникĕсене сталинла авиаци лотчикĕсен йачĕпе сывлăх сунса саламлать.

Пухури çынсем калама çук хаваслăн хавхаланса, Сталин йулташ патне салам йама йышăнаççĕ.

Пухăннисем пурте, пĕр çын пек пулса, урасем çине тăраççĕ, Сталин йулташа чысласа хаваслă оваци тăваççĕ.

Пухăва пынисем Молăтăвпа Калинин йулташсем патне саламсем йама панă сĕнÿве хĕрÿлĕн алă çупса йышăнаççĕ.

Мускаври парксенче праçнике столицăри çĕршер пин ĕççыннисем хутшăннă.

* * *

Чукунçул работникĕсен сталинла кунĕ йачĕпе Совет Сойузĕн ытти хулисенче те калама çук пысăк митингсемпе чаплă пухусем пулса иртнĕ.

Ленинградра уйава 100 пин çын ытла хутшăннă.

Митинг хыççăн Ленинград хулинчи чукунçул работникĕсемпе ĕççыннисем Каганович йулташ Мускаври чукунçул работникĕсен праçникĕнче калана сăмаха радио тăрăх итленĕ. Халăх Комиссарĕн сăмахне итленĕ вăхăтра темиçе хут та тăвăллăн алă çупнă.

(ТАСС).

Кино шкулсенче

1937—38 çулхи вĕренÿ çулĕнче РСФС Республикĕнчи кĕсĕн тата вăтам шкулсенче ансăр плонкăлă 4096 киноустановкă ĕçленĕ.

Çитес вĕренÿ çулĕнче киноустановкăлă шкулсен хисепĕ чылай пысăкланать. РСФС Республикĕнчи шкулсем çак çулта çĕнĕрен 2,5 пин киноустановкăсем илеççĕ.

Вĕренÿ филмисене 200 ытла хатĕрленĕ, вăл шутран кĕçĕн шкулсем валли 48 филм. Кашни филма 250 екземплăр кăларассĕ.

(ТАСС).

Йапони военщчини çĕнĕ провокацисем тăвать

ТАСС çапла пĕлтерет: йиулĕн 31-мĕшĕнче Йапони военщчини Хасан кÿллинчен хĕвеланăç йенчи высотасем (çÿлĕ вырăнсем) çинче совет чиккине пăсса каçнă, Йапони çарĕсем, кĕтмен çĕртен тупăсенчен пеме пуçласа, çĕрлехи вăхăтра сасартăк ССР Сойузĕн чикĕ хуралĕ çине атакă пуçланă. Йапонецсем совет территорине 4 километр шалала кĕрсе йышăннă. Хасан кÿллинчен хĕвеланăç йенчи высотасем çинче çапăçу пуçланса кайнă. Çапăçу темиçе сехет хушши пынă.

Йапони военщчинине вăйлă отпор параççĕ. Йапони çарĕсен салтакĕсем нумай вилеççĕ тата материаллă чаçсем нумай пĕтеççĕ. Совет çарĕсен мĕн чухлĕ çухату пулнине шута илеççĕ.

Республиканецсен Ебро йуханшыв çинчи наступленин пирвайхи ултă кун хушшинчи итогĕсем

Республикăлă Испани пичечĕ республиканецсен Ебро йуханшыв çинчи наступленин пирвайхи ултă кунхи итогĕсем çинчен çырать. Ку наступлени фашиссене кĕтмен çĕртен сасартăк çавăрса илнĕ. Республиканецсем Ебро йуханшывне трук ах темиçе тĕлтен каçса, ултă кун хушшинче 45 километр сарлакĕш фронтпа вăтамăн 32 километр малала кайнă. Вĕсем 700 тваткăл километр территори çавăрса илнĕ, 5 пин çын ытла тыткăна илнĕ тата вăрçă хатĕрĕсен пысăк запасĕсене туртса илнĕ.

Республиканецсем Ебро çине наступлени туни Испанире вăрçă пуçланнăран вара чи пысăк операцисенчен пĕри пулса тăрать. Ебро йуханшывĕ урлă каçассине республиканецсен командованийĕ питĕ тĕплĕ хатĕрленĕ пулнă. Çак операци ăнăçлăхĕ тĕпрен илсен вăл, кĕтмен çĕртен пулнинчен килнĕ. Понтонлă кĕперсене темиçе сехет хушшинче сарлака та тарăн шыв урлă карса хумала пулнă, çав понтонлă кĕперсем вĕсем тăрăх артиллери тата грузовиксене каçармашкăн çителĕклĕ çирĕп пулмала пулнă. Кĕперсем çине фашиссен авиацийĕ тапăнасран хÿтлемели ĕçсене малтанах тунă пулнă.

Республиканецсен Ебро йуханшыв çинчи наступлени пăлхавçăсемпе интервентсене Левант фронтĕнчи операцисене чарса лартмала тунă. Икĕ кун хушши лăпкă тăнă хыççăн, республиканецсем Левант фронтĕнче наступление куçса, фашиссен хăшпĕр пысăк позицисене çавăрса илнĕ.

(ТАСС).

ЧАССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕнче

Августăн 1-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн пĕрремĕш ларăвĕ пулса иртрĕ. Ларăва З. А. Андрейĕва йулташ председател пулса йертсе пычĕ.

Президиум Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене тата Çессин стенографилĕ отчотне те чăвашла тата вырăсла чĕлхесемпе пичетлесе кăларма йышăннă.

ЧАССР Верховнăй Совет Президиумĕн ларăвĕсене хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлеме тата кулленхи ĕççене туса пыма ЧАССР Верховнăй Совет Президиумĕ çекретариат тума йышăннă, çекретариат составне Г. М. Гуçĕв, И. Н. Никифăрăв, И. [illegible] Семенăв, В. М. Шишкин, И. В. Дубăв йулташсем кĕреççĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн аппарачĕ мĕнле пулмалли планне туса хатĕрлеме комисси уйарчĕ. Комиççире: З. А. Андрейĕва, В. М. Шишкин, И. В. Дубăв, Г. М. Гуçĕв, А. [illegible] Волков йулташсем.

Ларура çавăн пекех Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн председател заместителĕсен ĕçĕсем çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухрĕç. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиум председателĕн заместителне А. М. Краснов йулташа вăлапăх Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕнче ĕçлеме, тунă. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиум председателĕн заместителĕ П. М. Матвеева йулташа ЧАССР Верховнăй Совет Президиумĕнче ĕçлеме кирлĕ чухне вăхăтăн-вăхăтăн чĕнсе илмелле тунă.

„Красная Чувашия" тата „Чăваш Коммунĕ" хаçатсене „ПСК(б)П Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн органĕ" тума йышăннă.

Ларура тата Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕсен депутат билечĕн тата кăкăр çине çакмалли значокĕн образецĕсене çирĕплетрĕ.

ЧАССР Верховнăй Совет депутачĕсен çырăвĕсем

Сталин йулташ пире телейлĕ пурнăç пачĕ

Суйлавçă йулташсем, епĕр, Чăваш республикĕнчи халăх суйласа йанă депутатсем, çак кунсенче ЧАССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессинче пултăмăр.

Ĕлĕкхи, революцичченхи йалсенче пупсемпе пуйансем çеç лайăх пурнăç курнă. Политикăлă пурнăçри пĕтĕм ыйтусене вĕсем сÿтсе йавнă. Октаберти Социалисăмлă Аслă революци çын вăйĕпе ырă курса пурăннă харам пырсене çĕр пичĕ çинчен шăлса тăкрĕ. Совет влаçĕ ĕççыннисене кирлине пурне те пачĕ. Коммунисла парти тата халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин йулташ йертсе пынипе епĕр телейлĕ пурнăç çĕнсе илтĕмĕр.

Болшевиксен Коммунисла партийĕ тĕрĕс йертсе пынипе Урхас Кушкă йалĕнчи (епĕ кунта колхоз председателĕнче ĕçлетĕп) хресченсем пурте колхоза кĕчĕç. Пирĕн колхоз социалисăмлă тăван çĕршыври ытти çĕршер колхозсем пекех болшевикла ĕçлекен колхоз пулса тăчĕ, колхозниксем пуйан та телейлĕ пурнăçпа пурăнаççĕ.

Колхозра лаша ферми пур, унта епĕр лайăх рысаксемпе обоз лашисем ÿстеретпĕр. Халĕ фермăра 28 лаша шутланать, вĕсенчен 17 лаша Хĕрлĕ Çар фондне уйăрвă.

„Çавăн пекех таварлă сĕт-çу фермы, çу çапакан машинă, арман тата çăм тапакан машинă пур. Вĕсем пурте двигател вăйĕпе ĕçлеççĕ. Кирпĕч таватпăр, хăмла плантацийĕ тата пыл-хурт утарĕ пур.

Агрономи техникине пăхăнса ĕçленипе пирĕн тырпул тухăçĕ çулрăн-çулах ÿссе пырать. 1937 çулта вăтамăн илсен кашни гектартан 102-шер пăт тĕштырă туса илтĕмĕр, колхозниксем ĕçкунĕ пуçне 9,2 килограм тырă илчĕç.

Суйлавçă йулташсем! Ăнса пулнă тырпулсене пухса кĕнĕ çĕрте стаханăвла ĕçлесе пырар, ĕç тухăçлăхне вăйлă ÿстерер!

Пирĕн колхоза Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма лаша ĕрчетес йĕнĕпе тата тырпулсем йĕнĕпе кандидата çирĕплетнĕ. Пирĕн колхозниксем партипе правителства хунă шанăça тивĕçлипе пурнăçлĕç тесе шанатăп.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи „Çăлтăр" колхоз председателĕ— ЧАССР Верховнăй Совет депутачĕ

С. И. Йакăвлĕв.

Халăх ирĕкне пурнăçлатпăр

Епĕр, чăваш халăхĕ суйланă çынсен орденлă Чăваш республикĕн Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессинче пултăмăр. Верховнăй Совет пысăк ыйтусене пăхса тухрĕ.

Ийулĕн 27-мĕшĕнче епĕр Çессире Мандант Комиççи председателĕн Полтĕв йулташăн докладне итлерĕмĕр.—Чăваш АССР Верховнăй Советне 26—хĕрарăм суйланнă,—терĕ вăл. Ку ĕнтĕ государствăна йертсе пырас ĕçре хĕрарăмсем те арçынсемпе танах хутшăннине татах лайăх çирĕплетсе парать.

Пирĕн аннесем, пирĕн аппасем ĕлĕк кăмака кукринчен ниçта та тухса курман. Вĕсене халăх ĕçне суйлама мар, халăх пуххине те кÿртмен. Халĕ, Сталинла саманара, пачах урăхла. Акă мана, 22 çулхи чăваш хĕрне, Верховнăй Совет депутатне суйларĕç. Ку ĕнтĕ маншăн питех те пысăк хисеп тата чыс.

Халĕхи вăхăтра епĕ Вăрнарти машинă-трактăр станцинче хĕрарăм тракториссен бригадин бригадирĕ пулса ĕçлетĕп. Бригадăра трактористсем, комбайнерсем тата ытти пĕтĕмпе 12 хĕр. Пурнăç лайăх, çавăнпа ĕçлеме те хаваслă. Пурте çамрăк, пурте совет влаçĕ ĕмĕринче çитĕннĕскерсем, кашнийех пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлетпĕр. Çтепанăвăпа Куçмина йулташсем социалисăмлă ăмăрту договăрне вăхăтра тĕрĕслесе тăраççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те нормăна ытлăшшипех тултарса ĕçлеççĕ. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессин уçăлнине ман бригадă пысăк хаваслăхпа, пысăк çитĕнÿпе кĕтсе илчĕ. Çессин уçăличчен икĕ кун малтан комбайнпа вырма тытăнтăмăр. Комбайнерка Йучинă Анастасçийа йулташ нормăпа 12 гектар вырас вырăнне ийулĕн 25-мĕшĕнче 21 гектăр, ийулĕн 26-мĕшĕнче,—Çессин уçăлнă кун 23 гектар вырнă.

Тăрăшса ĕçлетпĕр, кану вăхăчĕсене те савăнса ирттеретпĕр. Пирĕн уйрах патефон, балалайкă тата ытти тĕрлĕ музык инструменчĕсем те пур. 80 кĕнекелĕ библиотекăна та хамăрпа пĕрлех уйра тытатпăр. Бригадăри хĕрсем кашнийех тĕрлĕрен кĕнекесене вулаççĕ. Вунă кунта пĕр номĕр çтена хаçачĕ кăларса тăратпăр. Бригадăпа тĕрлĕрен хаçат-журналсем пĕтĕмпе 8 екземпłар çырăнса илетпĕр.

Иртнĕ çулта епĕр ĕçре пысăк çитĕнÿ тунăран бригадăри 5 çынна премилерĕç.

Мана 47-мĕш округ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйласа пысăк чыс турĕç. Епĕ вăл чыса малала татах лайăх ĕçленипе ответлетĕп. Ленин пек, Сталин пек халăх ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйран ĕçлеме пулатăп.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ— Йефроçинийă Харитонăвă.

Чăх-чĕп ĕрчетекенсен курсĕ

Канашри чăх-чĕп комбиначĕ çумĕнче Пĕтĕм Сойузри Центрмйасоптицăн чăх-чĕп ĕрчетекенсен курсĕ уçăлчĕ. Курсра тĕрлĕ нацилĕ республикăсенчен 40 çын вĕренеççĕ. Курсантсем курсран вĕренсе тухсан, чăх-чĕп комбиначĕсене ĕçлеме каййççĕ. Курсра чăх-чĕп организмĕ çинчен вĕрентме Мускавран профессăр Цвейтăв йулташ килнĕ.

П. Кириллăв.

Çуртрисене те вырса пĕтерне

ЙЕЛЧĔК, ийулĕн 29-мĕш. Пăтрекелĕнчи „Осоавиахим" колхоз членĕçем тырпулсене кĕске вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртес тĕлĕшпе Аслă Йелчĕкри Ленин йачĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлеççĕ.

„Осоавиахим" колхозри колхозниксемпе колхозницăсем стаханăвла ĕçлесе, ыраша 4 кун çурăра вырса пĕтерсе, ийулĕн 23-мĕшĕнче пиççе çитнĕ вырăнсене суйласа çурхи тырăсене вырма тухрĕç. Бригадăсемпе звеносем, жнейкăпа выракансем тата колхозниксем хушшинче социалисăмлă ăмăртупа стаханăвла йухăма анлăн сарса йанă. Ийулĕн 28-мĕшнĕ 1—2-мĕш бригадăсем пур йышши çурхи тырăсене те вырса пĕтерчĕç. Жнейкăпа выракансем Алексей Захарăв, Висарион Захарăв, Диомид Маркăв йулташсем кашни кулленех 10—12 шер гектар вырса, кулленхи нормăна 200—250 процент ытла тултарса пычĕç. Кĕлте çыхакансем А. Зотникăв, А. Енейкинă, Çироткинă, Йу. Блиновă, Выйкитăвă йулташсем кулленхи ĕç нормине 200—230 процент тултарса пычĕç. Бригадăсенче тăккаланчăксемпе кĕрешессине те лайăх организациленĕ.

Колхоз тырă вырма тухнăранпа бригадăсенче 5—6-шар номĕр çтена хаçачĕсем кăларвă. Агитатăрсемпе политвулавçăсем хаçат-журналсене вуласа пана.

Колхозра тырă вырма тухсан чăрмавсем ан пулччăр тесе, ыраш вырма тухнă кунран пуçласах пĕрле апатланмали столовăй ĕçлерĕ, тата 136 ача йаçлĕре пулчĕ.

Ийулĕн 29-мĕшĕнче „Осоавиахим" колхозĕн пур бригадисем те çурхи тырăсене вырса пĕтерчĕç.

Гер. Иванов.

Кĕрхи тырăсене ăнăçлăн пухса кĕртрĕç

ÇĔРПУ. Пысăк Чăрăш йалсоветне кĕрекен „Пучах" колхоз членĕсем кăçалхи тырпулсене пухса кĕртме лайăх хатĕрленсе тухрĕç.

Колхозра пурĕ 4 бригадă. Кашни бригадăрах 10—12 çынтан звеносем туса хунă. Бригадăсенче тата звеносенче ĕçе тĕрĕс организациленĕ. Бригадăсемпе звеносем тата уйрăм колхозниксем ыраш вырнă вăхăтра социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса йачĕç. Ăмăртура пĕррремĕш бригадă мала тухрĕ. Ку бригадăри колхозниксем кулленхи ĕç нормине 170—200-шер процент тултарса пычĕç.

Колхозăн ырашпа кĕрхи тулăна (пурĕ 114 гектар) план тăрăх 7 кун вырмала пулнă. Плана срукченех тултарчĕç, 6 кунра, ийулĕн 25-мĕшĕнче, вырса пĕтерчĕç.

Ыраш вырса пĕтерне хыççăнах колхоз кĕлте кÿрсе авăн çапас ĕçе тытăнчĕ. Авăн çапас ĕçре пĕррремĕшпе тăваттăмĕш бригадăсем авăн ĕçлеççĕ. Колхозниксем ĕçе вăхăтра тухаççĕ, ĕçе тĕплĕн тăваççĕ. Анчах та иккĕмĕшпе виççĕмĕш бригадăсем йулсарах пыраççĕ. Ку бригадăсенче ĕç дисциплини те йапахрах. Вĕсен витнĕ итемсем те çук.

Колхоз ийулĕн 29-мĕшне ыраш кĕлтине итем çине кÿрсе капана хывса çитерчĕ. Капан тăвас ĕçре ватă колхозник Н. Данилăв тăрăшса ĕçлерĕ. Кĕлте кÿртес ĕçре А. Йегорăв, И. Çергейĕв тата ытти колхозниксем те тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем хăйсен нормисене 200—300 процент тултарса пычĕç. Колхоз государствăна 500 пăт ыраш памала. Вăл тырра çапса çитерне, августăн 1-мĕшĕнче леççе пĕтерĕççĕ. Халĕ колхозниксем çуртри вырма тухрĕç. Ĕçре машинăсемпе анлăн усă кураççĕ. Машинăпа лайăх усă курни тата ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарни ĕçĕн пахалăхне, ĕç тухăçлăхне ÿстерме май парать. Çакна шута илсе ĕнтĕ колхоз жнейкăсене йусăса машиноведсем çумне çирĕплетнĕ. Халĕ машиноведсем çуртри вырас ĕçе пысăк пахалăхпа туса параççĕ. А. Йегорăв машиновед нормăна 120—150 процент тултарса пырать. Колхозниксем кĕлте çыхас ĕçре те хăйсен активлăхне кăтартаççĕ.

Кунта политикăлă-массăлă ĕçе аван йĕркеленĕ. Каннă вăхăтсенче колхозниксем хаçат-журналсем вулаççĕ, агитатăрсем кăлаçусем туса ирттереççĕ.

М. Йакăвлĕв.

Çуртри вырма тытăнчĕç

СĔНТĔРВĂРРИ. Районри чылай колхозсем ыраш вырса пĕтерсе, авăн çапса государствăна тырă пама, çуртри вырма тытăнчĕç. Чăрăшкассинчи „Социалисăм" колхоз кĕрхи тырăсене вырса пĕтерне хыççăнах авăн çапма тытăнчĕ. Ку колхоз государствăна ыраш парса татрĕ. Пиллĕкмĕш кун ĕнтĕ çуртрисене жнейкăсемпе выраççĕ. Чĕнерти „Стрела" колхоз та районри колхозсенчен маларах ыраш вырса пĕтерсе, маларах çуртри вырма тухрĕ. Çак колхозра ĕçе тĕрĕс йĕркеленĕ. Кашни бригадăра звеносем тунă. Çав звеносем тырă вырас çĕрте ăмăртса ĕçлеççĕ. Ĕçе пысăк пахалăхла тăваççĕ.

Çак кунсенче пур колхозсем те çуртрисене вырма тухаççĕ.

Гр. Смирнов.

Патăрйел районĕнчи Шмидт йачĕпе тăракан колхозра. Кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче колхозниксемпе калаçу ирттереççĕ.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Тăкак ан пултăр

Сталинла 7—8 мĕлйард пăт тĕштырăшăн колхозниксемпе колхозницăсем социалисăмлă ăмăртса ĕçлени кăçал тепĕр пысăк çĕнтерÿ тума май пачĕ—колхозсен уйăхрĕнче вăйлă тырпул пулчĕ. Вăйлă тырпул колхозниксемпе колхозницăсене çеç мар, совет çĕршывĕн мĕн пур ĕççыннисене савăнтарать.

Çĕнĕ тырпула пĕтĕмпех пухса кĕртсе усрамала, пĕр килограм та тăкак пулмала мар. Тăкак пулни совет государствине сийен туни, колхозниксен ĕçкунĕ хакне колхоз тупăшне чакарнине, йалхуçалăх продукцине сахаллатнине пĕлтерет. Çавăнпа тăкак туни вăл государствăна тата колхоза хирĕçле ĕç пулать.

Пĕр килограм та тырă çухатмала мар тени тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçре тĕп лозунг пулмала. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „1938 çулти тырпулсене пухса кĕртесси çинчен" йышăннă постановленире тăкаксемпе кĕрешмели программăна тĕплĕн кăтартса панă.

Правителства тырпулсене кĕске вăхăтра тата лайăх пахалăхпа пухса кĕртме хушать. Комбайнсемпе тата тырă вырмали машинăсемпе пуринпе те туллин усă курса ĕç нормисене ытлашшипех тултарса пымала. Ĕç нормисене ытлашшипех тултарса пыракан комбайнерсемпе машиноведсен, уйхир стаханăвĕçĕсен йышĕ кăçал чылай ÿсрĕ. Çав вăхăтрах йапăх ĕçлекен машинă-трактăрлă станцисем те пур-ха. Ĕлĕк районĕнче 9 комбайнпа 4 кун хушшинче мĕн пурĕ те 350 гектар çеç вырса пуçтарнă. Вăрмар районĕнчи комбайнер Ланин кунне 23 гектар ытларах, Авакумăв—25 гектар вырса пуçтарать пулсан, Ĕлĕк районĕнче вăтам шутпа кашни комбайн пуçне кунне 9 гектар ытларах çеç тивет.

Комбайнсемпе туллин усă курманни тырпулсене пухса кĕртес ĕçе вăрăма йарать. Ĕç вăрăма кайни тăкаксене нумайлатни пуриншĕн те паллă. МТС руководителĕсен ĕçĕ халь комбайнсем мĕнле ĕçленине кура хаклать, çавна вĕсен лайăх пĕлсе тăмала.

Лайăх ĕçлекен машиноведсем жнейкăпа кунне 12—17 гектăр таран выраççĕ. Çав вăхăтрах хăшпĕр колхозсенче жнейкăсемпе сахал усă кураççĕ йе пачах ĕçлемеççĕ. Тептери „Майăн 1-мĕшĕ" колхозăн (Тутаркас р.) ыраш тăкăнакан пулнă, анчах 3 жнейкăран пĕрне те уйа илсе тухман. Вăрнар районĕнчи Калинин йачĕпе тăракан колхозра та жнейкăсемпе ĕçлемен пирки ĕç вăрăма кайнă. Çавăн пек ĕçлекен колхозсенче, паллах, тăкаксемпе кĕрешесси çинчен калаçу çеç пулма пултарать.

Авăн çапма, кĕлтесене турттарса капана хывма тытăнма правителства паллă срук кăтартса пачĕ. Тырă вырма тухсан 3—5 кунтан авăн çапма, 10—15 кунтан кĕлтесене капана хывма тытăнмала. Çав срук та халь хăшпĕр районсенче пуçнăça кĕрсе пымасть. Турхан районĕнче пайанхи куна 48 колхозран 12 колхоз çеç авăн çапма тытăннă, 4 колхоз çеç кĕлтесене капана хывма пуçланă.

Тăкак пулассинчен сыхланас тĕлĕшпе тумали ĕçсем çаксемпех пĕтмеççĕ. Çĕнĕ тырпула тата клешчсенчен сыхламала. Çав шутпа кивĕ итемсене тасатса дезинфекцилесси, ампарсене тасатасси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Итемсене, ампарсене, тырпул тытмали ĕçхатĕрсене пурне те тасатса çитермеле.

Çавăн пекех çĕнĕ тырра тĕрĕс учота илни пит кирлĕ ĕç пулса тăрать. Авăн çапнă чух итем çинче пĕр хут, ампара кĕртнĕ чух тепĕр хут виççе пăхмала. Çапла тума хушать правителства. Тепĕр ĕç—ампара хывнă тырра тĕрĕс пăхса сыхласа усрасси. Тырра пăхман пирки иртнĕ çул хăшпĕр вырăнсенче çĕртсе йани те пулкаланă. Акă, тĕслĕхрен, Шăхасан районĕнчи „Çамрăк колхозник" колхозра 188 центнĕр ыраш тата 22 центнĕр викă çĕртсе йанă. Çавăн пекки кăçал нихăш колхозра та пулмала мар. Ревизи комиççийĕсен ампарсенчи тырă мĕнле сыхланса тăнине йалан тĕрĕслесе тăмала.

Йулашкинчен итем çинчи тата ампарти тырра çаратасран сыхласси те пысăк вырăнта тăмала. Тырăсене хуралас ĕç шанчăклă колхозниксен аллинче пулма кирлĕ. Колхоз пурлăхĕ пĕр пуслăх та çухалмала мар.

Ăнса пулнă тырпул пĕр пĕрчĕ те ан çухалтăр. Тырпулсене пухса кĕртес ĕçе çав лозунгпа ирттермеле. Çапла ĕçлесен çеç колхозниксен ĕçкунĕн хакĕ туллин, çĕршыври йалхуçалăх продукцийĕ çителĕклĕ пулать.

Силос хываççĕ

Хĕрлĕ Чутай. Районра чылай колхозсем тĕрлĕрен курăксенчен силос хывса хăвараççипе тăрăшса ĕçлеççĕ. Хирлукассинчи „Заветы Ильича" колхоз 9 тоннă хывса, районĕ памалли плана ытлашшипех тултарнă.

Й. Çигайĕв. Й. Самарин.

Çĕршывăмăра хаклă парнесем парар!

Кăçал октаберĕн 29-мĕшĕнче Ленинла-Сталинла мухтавлă комсомол болшевикла партин пĕрремĕш помощникĕ, пĕтĕм тĕнчери революцилĕ çамрăксен кĕрешÿри паттăр авангарчĕ 20 çул тултарать. Совет çĕршывĕнчи телейлĕ те савăнăçлă çамрăксен уйавĕ—чаплă йубилей çывхарса килет. Хăйсен уйавнĕ хатĕрленнĕ май, çамрăксем Ленин-Сталин партине, совет влаçне чĕререн парăнса тăнине, тăван çĕршыва вĕçĕмсĕр йуратнине татах та уççăнрах кăтартасшăн. Кашни çамрăк патриот Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнине çĕнĕ çитĕнÿсемпе, тăван çĕршывăмăра—аннене вăльли хаклă парнесем хатĕрленипе кĕтсе илесшĕн.

Çамрăксен çакăн пек ĕмĕчĕсемпе шухăшĕсене Мускаври Сталин йачĕпе хисепленекен автосавăтри комсомолĕцсем, çамрăк рабочисемпе работницăсем хăйсен сĕнĕвĕнче лайăх каласа пачĕç. „Тата паттăртарах ĕçлес килет, тăван çĕршыв чаплăхĕшĕн болшевисăмă тата лайăхрах вĕренес килет... Комсомол 20 çул тултарнине лайăх ĕçсемпе, тăван çĕршывăмăра—аннене лайăх парнесем парса паллă тăвас килет... Комсомол 20 çул тултарнă йатпа ССР Сойузĕнчи кашни çамрăк хăйĕн тăван çĕршывĕ валли парне хатĕрлесе паттăр".

Автосавăт çамрăкĕсен шухăшĕ—Совет Сойузĕнчи пĕтĕм çамрăксен шухăшĕ. Çавăнпа вĕсем чĕнсе каланă хыççăн тăван çĕршывăн пур кĕтессисенче те çамрăк патриотсем парнесем хатĕрлеме хастарлăн тытăнчĕç. Анлă çĕкленĕве пирĕн орденлă республикăри комсомол организацисем те хапăл туса йышăнчĕç. Колхозсенчи, хапрăксавăтсенчи, предприйатисенчи йышлă комсомол организацисенче чăн-чăн производствăлă çĕклевÿ, социалисăмлă ăмăрту, стаханăвла йухăм тата ударничествă сарăлса пырать. Акă „Коммунар" колхоз (Куславкка р.) çумĕнчи комсомолĕцсем, колхоз производствинчи мĕн пур çамрăксене стаханăвла ĕçлеме вĕрентетпĕр, хамăрăн „Коммунар" колхоза стаханăвла ĕçлекен колхоз туса хуратпăр, теççĕ.

„Орешник" колхозра (Шăхасан р.) комсомол пуçламĕш организаци районра чи аван ĕçлекенни ен хисепĕнче тăрать. Организаци çумĕнчи политкружок çирĕп план тăрăх кăтартулă ĕçлисе пырать. Кружок членĕсем пурте занйатисене пĕр сиктермесĕр çÿреççĕ, лайăх вĕренсе пыраççĕ. Уйри тырпула пуçтарса кĕрекен колхозниксем хушшинче организацири вуншар комсомолĕцсем—агитатăрсем, хаçат вулавçисем пулса ĕçлеççĕ.

Тутаркас районĕнчи Войкăв йачĕпе тăракан колхозри комсомол комитечĕн çекретарĕ пулса халăх хушшинче хисеплĕ Васçă Шурнейăвă йулташ ĕçлет. Унăн организацинчи комсомолĕцсем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Пур комсомолĕцсемпе колхозниксене те агротехникă вĕреннĕне йавăçтарнă.

ПСÇЛКС 20 çул тултарни сталинла виççĕмĕш пилĕкçуллăхăн пĕррремĕш çулĕнче килет. Ку вăл ĕçе пуçĕрсе пыракан совет çамрăкĕсенчен тата тимлĕрех, тата лайăхрах ĕçлеме ыйтать. Нумай комсомол организацисем çакна чăннипех ăнланса илчĕç. Шупашкарти тир-сăран савăтĕнче, ремонтно механически савăтра ĕçлекен комсомолĕцсем комсомол 20 çул тултарнă йатпа социалисăмлă ăмăртăва тухрĕç, савăтăн çулталăкри планне срукчен ытлашшипех тултарма пулчĕç. Ремонтно-механически савăтри комсомолĕц-стаханăвĕц В. Т. Терентйĕв йулташ ăмăртăва хутшăнса, ĕç нормине кашни уйăхрах 350 процентран кайа мар тултарма пулать. Вăл йубилей тĕлне лотчиксем хатĕрлекен шкултан вĕренсе тухма, ПСК(б) Парти ретне кĕме хатĕрленет.

Куславкка комбинатĕнчи стаханăвка, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Фирсăвă йулташ, производствă программине уйăхсерен 200 процентран кайа мар тултарса пыма, ПВХО тата ГСО значокĕсен нормисене пама пулать.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукун çул строителствинче ĕçлекен комсомолĕцсем те пĕтĕм Сойузĕпе сарăлнă çамрăксен йухăмне активлăн хутшăнчĕç. Виççĕмĕш участокри комсомолĕцсем ĕç нормисене 125—150 процент тултарма, халĕ çеç организациленĕ техникă кружокне çÿресе лайăх вĕренсе пыма пулаççĕ.

Çамрăксен комсомолла бригади (бригадирĕ Пушков Й.) уйав тĕлне пур ĕçре те стаханăвла ĕçлеме сăмах парать. Бригадăри Шеликăв, Йемелйанăв, Трофимăв комсомолĕцсем нормăна 175 процентран кайа мар тултарма пулаççĕ.

Онуфриади, Граматопуло комсомолĕц строймастăрсем, çĕр чавакан рабочисенчен 2 уйăх хушшинче 2 деçатник хатĕрлеме вĕсене техминимума отличнă вĕрентме пулаççĕ.

Çамрăк патриотсем хăйсен социалисăмлă çĕршывне питĕ йуратаççĕ, унăн ĕçĕсемшĕн, çитĕнĕвĕсемшĕн кăмăлран савăнаççĕ, çĕршывăн тăшманĕсене чунтан курайманаççĕ. Çĕршывăн сыхлăх тĕрекне вăйлатасси, çар ĕçне тĕплĕн вĕренесси, Осоавиахима тĕреклетесси—комсомолăн чи хисеплĕ задачи.

„Осоавиахим" колхозри (Йелчĕк районĕ) комсомолĕцсем, колхоз çумĕнчи Осоавиахим организацине лайăх ĕçлекен туса, оборонă кружокĕ урлă ворошиловла тĕл перекен значкиссене 20 çын, ГСО значкисĕсене 25 çын тата ПВХО значкисĕсене 25 çын хатĕрлеме йышăннă.

„Коммунар" колхозри (Куславкка районĕ) комсомолĕцсем, вăрçă техникине кашнийех вĕренме, октаберĕн 20-мĕшнĕ тĕлне пурте ворошиловла тĕл перекенсен, ГТО, ГСО тата ПВХО значоксен нормисене пама пулаççĕ.

Çыхăну суртĕнче ĕçлекен Т. Васильйевă комсомолкă 2 уйăх хушшинче ПВХО значокĕсене илнĕ 20 çамрăка кружок урлă хатĕрлеме пулчĕ.

Черетлĕ ытти ĕçсемпе пĕрлех, комсомолăн çамрăксене тата ачасене политикăлă вĕрентсе пымалине, вĕсен культурăлăхне хăпартмалине манса хăварма йурамасть. Ленин,—„вĕренмеле, вĕренмеле тата вĕренмеле", тенине, Сталин йулташ—„ленинисăма вĕренмеле, татах тепĕр хут вĕренмеле", тенине комсомол организацисен кулленхи ĕçĕнче пурнăça кĕртсе пырассишĕн вĕрешмеле.

Çакна шута илсе, Шупашкарти Çыхăну суртĕнчи, механисăмсене йусакан савăтри т. ыт. çĕрти комсомол организацисенчи комсомолĕцсем пурте парти историне, йе кулленхи политикăна вĕренмели, работниксен квалификацине ÿстермели кружоксене йĕрке-ĕ çÿреме, лайăх вĕренсе пыма пулчĕç.

Ленинла — Сталинла комсомол 20 çул тултарнă уйава паттăрăн ĕçлесе, пушшăн шавламасăр, хатĕрленсе кĕтсе илмеле,—шав кулленхи ĕçе путарни ан пултăр. Кун çинчен ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕ Сталин йачĕпе хисепленекен автосавăтри çамрăк стаханăвĕçсен çырăвĕ çинчен йышăннă постановленире „Комсомолăн пур организацисене, вĕсен руководителĕсене, çак кирлĕ ĕçе пуш сăмахлăх тата парадлăх туса йамалла марри çинчен асăрхаттарать",—тесе каланă. ПСÇЛКС Тĕпкомĕн ку асăрхаттарăвне кашни комсомол организаци асра тытмала.

Кашни комсомол комитечĕпе активиссен тÿрĕ ĕçĕ—вăл патриотсен çакă пăха йухăмне пиншер çамрăксене йавăçтарасси пулать. Комсомол активисĕсемпе руководителĕсен цехсене, бригадăсене кайса çамрăксемпе пĕрле калаçмала, çамрăксен творчествăлă активлăхне хăпартма пултаракан парнесем хатĕрлеме пулăшмала.

Малтанхи кунсенчех илнĕ обйазателствăсене мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслеме тытăнмала. Цехсенче, уй-хирте т. ыт. çĕрте, плакатсемпе, лозунгсемпе, çтена хаçачĕсем кăларса çамрăк патриотсен тăван çĕршыва валли мĕнле парнесем хатĕрлени çинчен каласа пымала. Комсомол комитечĕсен кашни обйазателствăна питĕ тĕплĕн шута илсе пымала. Комитетсен пĕр ларăвĕ те çамрăксем обйазателствăсене йĕпле пурнăçласа пынине тĕрĕслемесĕр иртмеле мар, обйазателствă илнисене кулленех практикăлă пулăшу парса тăмала.

Ленинла—Сталинла комсомол 20 çул тултарнă чаплă уйава мухтавлă ĕçсемпе, хамăрăн чунтан йуратакан тăван çĕршывăмăра—аннене хаклă парнесем парса паллă тăвар!

Т. Иванов.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Политикăлă-массăлă ĕç çинчен маннă

Колхоз уйăхирĕсенчи тырпулсем йăлтах пулса çитнĕ. Вĕсем вырса пуçтарса кĕртессе кĕтеççĕ. Анчах, Шăмăршă районĕнче уборкăна çителĕклĕ хатĕрленсе тухман пирки, хăшпĕр колхозсем кайа йулса пыраççĕ. „Светлый путь" колхозра ийулĕн 28-мĕш тĕлне утă та çулса пĕтермен, çавăн пекех—Пашйелĕнчи, çĕнĕ Чукалри, Йарославри т. ыт. колхозсенче тырпулсене пухса кĕрес ĕç кайа йулнă.

Уборкăра кайа йулса пыни вăл пĕтĕмпех районри руководительсем çитĕнӳсемпе лăпланса ларнинчен килнĕ.

Çураки вăхăтĕнче колхозсенче политикăлă-массăлă ĕçе анлăн сарни çуракине ăнăçлăн иртерме пулăшнă. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленсе иртернĕ вăхăтра халăх хушшинче политикăлă агитацие лайăх организацилене. Районра 350 агитатăр ĕçленĕ.

Анчах, суйлавсем иртсен, ПСК(б)П Шăмăршă райкомĕпе пуçламĕш парторганизацисем агитатăрсене ĕçре пулăшса пырса, уборка вăхăтĕнче политикăлă агитацие тивĕçлипе йеркелесси çинчен маннă.

Суйлав иртнĕренпе агитколлектив руководительсене, агитатăрсене тата хаçат-журналсем вуласа паракансене пуçтарса пĕр канашлу та туса иртермен, уборка вăхăтĕнче мĕнле ĕçлемелине вĕрентмен. Çавăнпа ĕнтĕ халĕхи вăхăтра политикăлă агитаци сӳнсе ларнăпа пĕрех. Питĕ нумай агитатăрсем ĕçлемеççĕ, нумай колхозсенче стена хаçачĕсем тухмаççĕ.

Политикăлă агитаци ĕçĕ мĕнле тăнипе районра пит сахал интересленеççĕ.

Колхозсенчи активиссем уборкăра примерлăн ĕçлесе, мĕн пур колхозниксене хăйсем хыççăн хавхалантарса пымала, социалисăмлă ăмăртура стахановецсемпе ударниксем çитĕнмеле. Анчах, пит шел, вăл ĕç çителĕклĕ таран тата кирлĕ пек пулни çук. Парти райкомĕ, 3—4 çул кайалахи пек, колхозсене, йалсене „уполномоченнăйсем" йараt, çавăнпа пĕрлех районри руководительсем те колхозсене тухса çӳреççĕ. Анчах районра колхозсем нумай, пур колхозра та вăхăтра пулса кирлĕ пулăшу парса пырасси пит вăрама тăсăлаt. Колхозри пуçламĕш парторганизацисене, комсомолĕцсене тата колхозри пĕтĕм актива йавăçтарса ĕçлемесĕр ĕç тухмасĕ, йаланах прорыв пулаt.

Районри руководительсем çураки тата Верховнăй Совет суйлавĕсем вăхăтĕнче тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларнă. Çавăн пирки ĕнтĕ хăшпĕр колхозсем уборкăна кирлĕ пек хатĕрленсе тухман,—ĕçре дисциплинă çителĕксĕр, лаша кӳлмели хатĕрсем, хиртен тырпул турттарса кĕмели мих-шăналăксем тата урапасем те çитмеççĕ.

Ĕç дисциплини уйрăмăнах „Красная Нива", „Светлый путь", „Красная звезда", „Пламя труда" колхозсенче начар тăраt. Çак колхозсенчи руководительсем йаланах:—Пирĕн колхозра ĕçлекенсем çитмеççĕ,—теççĕ, йе тата хăшпĕр колхозниксем ĕçрен пăрăнса йулни çинчен калама йуратаççĕ. Райçĕрĕçпайĕнче, МТС-ра ĕçлекен работниксем те çав йуррах йурлама пăхаççĕ. Анчах вĕсем колхозри çак çитменлĕхсене пĕтерме колхозниксене мобилизацилемен. Йалхуçалăх ертелĕн Сталинла уставне пăсакансем пирки кирлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Пашйелĕнчи „Красная Нива" колхоз председателĕ Чернов йулташ:—Колхозра ĕçлеме пултаракансем 300 çын, вĕсенчен 100 çынĕ кăна ĕçleme тухнă,—тесе, ним тума аптаранă çын пек аллине сулаt. Чăнах та ĕнтĕ Чернов йулташ опытсăр çамрăк председатĕл. Ăна колхозри пуçламĕш парторганизаципе комсомолĕцсем ĕçре пулăшса пыни кирлĕ, анчах пулăшни курăнмасть-ха.

„Светлый путь" колхоз председателĕ Йавкин йулташ та, Чернов йулташ пекех, опытсăр çамрăк председатĕл, ăна пулăшу пит кирлĕ.

Шăмăршă районĕнче уборкăна хатĕрленсе тухман пирки ĕç вăрăма тăсăлса пыраt. Ĕç малашне те çаплах пырсан тырпулсене пухса кĕртиччен нумай тăкаксем пулас хăрушлăх пур. Пуринчен ытла вăл хăрушлăх „Красная Нива", „Светлый путь", Чапайĕв йачĕпе тăракан колхозсенче пысăк.

Колхозниксем хушшинче политикăлă воспитани ĕçне халех тивĕçлипе йеркелесе йамала, тырпула хиртен пухса кĕрес ĕçре социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса ĕçлесе, малти вырăна тухассишĕн кĕрешмеле. Тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларни пулмала мар.

Н. Косойкин.

Колхозри кандидатсен группин ĕçĕсем

„Çиçĕм" колхоз (Йĕпреç р.) çумĕнчи парти кандидачĕсен группинче членсем 2, кандидатсем 2. Вĕсем пурте парти историне вĕренмели кружокра вĕренеççĕ. Вĕренӳре И. Орлов, Моргинăв, Г. Симбирский йулташсем малта. Вĕсем занятисене хатĕрленсе пыраççĕ. Колхоз клубĕнче парти вĕренĕвĕ валли йатарласа пӳлĕм уйăрнă. Коммуниссем хăйсен политикăлă пĕлӳне ӳстерсе, колхозниксем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе сарса йама тăрăшаççĕ.

Колхозра 10 агитатăр—вĕсенчен И. Николайĕв, Раиса Иванова, Илйа Симбирский, Григорий Симбирский йулташсем аван ĕçлеççĕ. Вĕсем бригадăсенче хаçат-журналсем вулаççĕ, калаçусем иртереççĕ.

Колхозниксем хушшинче партилĕ-политикăлă ĕçе лайăх организациленипе колхоз производствинче пысăк ӳсĕмсем пур. „Çиçĕм" колхоз районта малта пыракансенчен пĕри пулса тăраt. Иртнĕ çулта тĕштыра гектартан 17 центнĕр илнĕ. Пахча-çимĕçсене лайăх пăхнипе хăйар гектартан 350 центнĕр, сухан 450 центнĕр, кишĕр 409 центнĕр илнĕ. Çак тĕштырăсен тата пахча-çимĕçсен тухăçлăхне ӳстерес ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн „Çиçĕм" колхоз Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулма кандидата тăчĕ.

Кандидатсен группи тырпула пуçтарса кĕртес ĕçре те аван йертсе пыраt. Каçал 236 гектар çинчен тырпул пухса кĕмеле. Колхоз июлĕн 27-мĕше тĕлне ыраш, кĕрхи тулă вырса пĕтерчĕ, пăрçа та пухса кĕнĕ. Çав кунах аван çапма пуçларĕ. Государствăна тырă памалли обязательствăна июлĕн 28-мĕшĕнче тултарнă.

Бригадăсенче вулавçăсем, агитатăрсем йаланах ĕçлеççĕ. Пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ, сочувствуйушчинче тăракан Николайĕв йулташ хĕрӳлĕ агитатăр пулса ĕçлет. Унăн бригадинче стахановецсем шучĕ те ӳсет.

Колхозри малта пыракан йулташсем хал парти ретне кĕме хатĕрленеççĕ. Акă Анфиса Орлова, Раиса Иванова колхоз ĕçĕнче тата агитаци ĕçне туса пырас çĕрте хăйсен пултарулăхне кăтартреç. Вĕсем партине кĕме хатĕрленсе çитнĕ. Каçал Иван Орлова, колхозра пыл-хурчĕсене пăхакана, парти членне илнĕ. Тата Николайĕв бригадира сочувствуйушчисен ретне илнĕ.

А. Михайлăв.

Парти работникĕсен курсĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ çумĕнчи парти работникĕсен курсĕ ĕçлеме тытăннăранпа пĕр уйăх çурă иртрĕ. Курсра райком секретарĕсем, инструктăрсем пĕтĕмпе 47 çын вĕренеççĕ. Программăна парти истори, ССРС истори, географи, Конституци, парти строительстви дисциплинисем кĕреççĕ. Çак программăна пурнăçлас тĕлĕшпе парти работникĕсем вĕренӳ ĕçне пĕтĕм вăйа хураççĕ. Вĕренекенсенчен нумайĕшĕ парти историне илемлĕ литературăсемпе çыхăнтараççĕ.

Çав вăхăтрах курсра вĕренӳ ĕçне йеркелесе çитерне теме иртерех-ха. Чи кирлĕ дисциплинăсене лекцисем вуланипех иртерсе йараççĕ. Сăмахран, ССРС историйĕпе 60 сехет лекци вуламала тунă. Лекцисен пахалăхĕ çителĕксĕр. Курсра вĕренекенсенчен нумайĕшĕ парти историне як-вис хут вĕренсе тухнă. Çавăнпа та пирĕн шутпа парти историне тĕплĕнрех, Ленин—Сталин произведенийĕсем тăрăх вĕренсе пымала пек туйăнаt. Кунта урăхла. Парти историне Стоцаров йулташ учебник тăрăх çеç, йе „В помощь партучебе" çинчи материалсем тăрăх лекцисем вуласа параt. Стоцаров йулташăн тата тепĕр çитменлĕх пур. Вăл вĕренекенсене вĕренни тăрăх мар, сăн-питрен пăхса хаклаt пулмала. Пĕрремĕш группăри старăстăна Йарандайкин йулташа унăн пĕлĕвне тĕрĕслемесĕрех „отлично" вĕренет, тесе отметкă параt.

Курсра вĕренекен Бирӳков.

Комсомолĕцсем вĕренӳре

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн V-мĕш Пленумĕ комсомолĕцсене тата союзра таман çамрăксене политвоспитани парасси çинчен тата политвĕренĕве чи çӳлĕ вырăна лартасси пирки хыттăн каласа хăварнăччĕ. Çак кăтартăва пурнăçлас майпа ПСÇЛКС Тăвай райкомĕ кăçалхи çул комсомолĕцсен тата союзра таман çамрăксен политвĕренĕвне чылай лайăхлатре. Халĕ районта политграматăна вĕренмели шкулсемпе кружоксем пурĕ 29 ĕçлеççĕ. Вĕсенче 559 комсомолĕц тата 123 союзра таман çамрăксем вĕренеççĕ. Район центрĕнче политграмăтăна вĕренсе пĕтернĕ комсомолĕцсем валли ПСК(б)Парти историне вĕренмели кружок организациленĕ. Вăл кружокра 23 комсомолĕц вĕренеççĕ.

Çĕлпуç Темерти политграмăтă кружокĕнчен 37 çын вĕренсе тухреç. Политзанятисем Тушкилте, Сакăтпуçĕнче, Тенейалĕнче, Йантăрчра, Çĕнĕ Пуйанкассинче, Йантших-Нăрвашра йеркелĕ пулса пыраççĕ.

Халĕ Тăрмăшра, Вăтайалĕнче, Кармалта, Кивĕ Пуйанкассинче комсомол организацисем „Наша родина" кĕнекене вĕренсе пĕтереççĕ.

Çĕнĕ Çырмари, Елпуçĕнчи организацисем начар ĕçлеççĕ-ха. Çĕнĕ Çырмара Михайлăв Григорий кăшни уйăхра 3-шер занятинă тăвас вырăнне, кутаранчен пĕр занятинă те туман.

Вл. Илйин.

„Илйин кунĕ" çинчен

Августăн 2-мĕшĕнче чиркӳ çыннисем „хăйар тата хăват тăвакан" Илйа „пророка" чыслама пăхаççĕ.

Библи вĕрентнĕ тăрăх, Илйа Аравин пушхирĕнче, Израил патшалăхĕнче, Ахав патша вăхăтĕнче Христос ерн пуçланиччен IX-мĕш ĕмер çурринче пурăннă. Вăл йеврейсен Йагве турринче хӳтĕленĕ, йеврейсене ытти тĕнсене тытма йавăçасран сыхланă пулаt. Вăл малашне мĕн пуласине калаçа пама пултарнă, хăватлă ĕçсем тунă, шăрăх тата выçлăх йе çăмăрпа тырпул йама пултарнă, çӳлтен вутка-вăр антарса чĕрĕ-чунсене çунтарса йама йе ырлăх пама пултарнă, кайрăнтарах вутлă урапа çине ларса çĕрелех пĕлĕт çине хăпарса кайнă иккен.

Аравире йеврейсем „кĕтӳ кĕтсе, выльăх ĕрчетсе пурăннă. Христос тĕнĕ пуçланиччен 1500 çул ĕлĕкрех йеврейсем Палестинăна куçса çĕр ĕçлеме тытăннă. Илйа çĕр ĕçлекенсен турри пулса тăнă. Малтан ун йат та пулман. Ăна „ваал", тата „Ил" йе „Эл" тенĕ. Пирĕн чĕлхепе каласан вăл „турă" тени пулаt. Йагве турă тĕнĕшĕн кĕрешнешĕн „Ил" сăмах çумне кĕскетнĕ „Йагве" йата хутшăнтарнă та, „Илйа" йаг пулса кайнă. Христос тĕнне пĕлмен йеврейсем çĕреçсен ăнаçĕ, çынсен вилĕмĕпе пурнăçĕ Илйаран килет тесе шутланă. Ана весем чыслама пăрахман. Палестина çĕрне перссем, сирийецсем тата римльянсем хăйсен аллине туртса илсе, халăха тискеррĕн пусмăрлама тытăнсан, Палестинăра „христос" килсе çăлассине шанма, çапла христос тĕнне тытма пуçланă. Анчах Илйана чыслама çапах та пăрахман, ана христос килес умĕн çӳлтен тепĕр хут анасса ĕненсе пурăннă. Çапла Илйа христос тĕнĕпе хутшăнса кайаt.

Христос тĕнĕ Российăна куçсан, хĕвелтухăçĕнчи славйансен Илйана ĕненесси шыв, тăвăл, çĕреç турринĕ Перуна ĕненессипе çыхăнса кайнă. Перун вутлă урапапа пĕлĕт тăрăх шатăртаттарса çӳрет, вутла ухапа перет, çиçĕм çиçтерет, пăр йараt тата ытти хăватсене, инкексене тăваt, тенĕ. Славйансем çутçанталăка ăнланман, ăна кĕрешме пĕлмен, çĕрĕçлекенсем хăйсен пурнăçĕнчи мĕн пур шанчăка Илйа çине хурса пурăннă.

Çапла Илйа авал Йагве турра ĕненекен йеврейсен, Перун турра ĕненекен славйансен тата христос турра ĕненекен халăхсен туррисенчен çăранса пулнă.

„Илйин кунĕ" ĕç массине питĕ пысăк сийен кӳрет. Çак кун тыра вырма пуçламала, утă çулса пĕтермеле тесе шутланă. Çак вĕрентӳ тырра пухас ĕçе сийен тăвакан вĕрентӳ. „Илйин кунне" кĕтсен, пирĕн Чăваш республикĕнче тыра вырассипе утă çулассн кайа йулаt.

Хăш çĕрте ĕненекенсем „Илйин кунне" чиркӳ патĕнче вăкăр йе пăру пусса, ашне халăхпа çинĕ, йе сутса укçине пупа панă. Вырăнĕпе чиркĕве çĕнĕ çăкăр леçсе кĕлтунă. Унтан ăна çинĕ тата пупсемпе ытткалаканĕсене панă. Хăшĕсем чиркĕве така, ури, пыл, сăра, ыраш пучаххи, симĕс пăрçа çыххи пырса панă. Ку йапаласенчен пупсен алине те сахалах мар лекнĕ. Çапла христиансем кирле мар тăкак туса, пупсене пуйтарнă, хăйсен хуçалăхне пысăк сийен кӳнĕ.

Хăш пĕр ĕненекенсем „Илйин кунĕнче" ĕçе тухса, Илйана çиллентересрен питĕ хăраççĕ. Çавăнпа та çак кун тыра вырма та, утă çулма та, вĕсене пухма та каймаççĕ, выльăхсене уйа кăлярма та тытăнса тăраççĕ. Çапла уйхир ĕçĕнче прогулсем тăваççĕ, тырăсене çĕре тăкаççĕ, выльăхсене килте тытса пăчăхтараççĕ. Çакна асархамала: тырра уйран пухса кĕрес ĕç йалхуçалăхĕн чи пысăк ĕçе.

Вырăнĕ-вырăнĕпе „Илйин кунне" ĕненекенсем ĕçкĕ çике парăнаççĕ. Ӳсĕрсем хушшинче час-часах йунлă çапăçусем пулса иртеççĕ. Çапла „Илйин кунĕ" сывлăха та сийен тăваt.

Илйана кăмăлласа ĕненекенсем уйра молебĕнсем тунă, ернипе типĕ тытса иртерне, ку йăла хăшпĕр çĕрте халĕ те пур. Çак йерке ĕçсыннисене тĕн серемĕпе вăратат, тĕттĕмлĕхре тытаt. Ку йеркене тата „Илйин кунне" чыслассине чиркӳ, пупсем, чиркӳ çыннисем хута кĕрсе тăраççĕ.

„Илйа пророк" пулман. Ăна шухăшласа каларнă. Кун çинчен ăслăлăх питĕ аван тĕпчесе пĕлнĕ. Илйа çинчен верентни халап, йумах иккенни çакантан та аван курăнаt. Чиркӳ асăнакан çĕр пек хытă пĕлĕт çук. Пĕлĕт вăл сывлăш, çавăнпа çӳлте. Сывлăшра нимĕнле Илйа та хăйĕн вĕсмен урапипе тытăнса тăма та, çӳреме те пултарайман. Сывлăшра аэроплансем çеç вĕçсе çӳреме пултараççĕ. Ăна пирĕн летчик-геройсем питĕ аван кăтартса параççĕ.

Аслати шатăртатни, çиçĕм çиçни Илйаран мар, електричествăран килет. Ун çинчен ăслăлăх пит аван калаçа панă. Тырпул ăнăçлă пуласси етемрен, вăл хастарла, ăслăлăх кăтартăва тăрах ĕçленинчен килет. Кăна колхозсен, стахановецсен, ударниксен, мичуринецсен çитĕнĕвĕсем аван çирĕплетсе параççĕ.

„Илйин кунне" чыслани тивĕççĕр. Ку кун ĕçе тухманни колхозсенче те, совхозсенче те пулмалла мар. „Илйин кунĕн" сийене çинчен вăрçăла турасăрсен организацийĕсем ĕçсыннисене тĕплĕн ăнлантарса памала. Производствăри хастарлăха, йалсенчи, хапрăк-савăтсенчи тĕне хирĕçле ĕçе тата çӳлерех хăпартмала.

Ф. Тимофейĕв.

Тĕне хирĕçле выставка

Йĕпреç клубĕнче районти парткабинет тĕне хирĕçле выставкă организациленĕ. Выставкă теми „Тĕн тата Конституци". Выставкăна кайран Буинск поçолкине, Хурамал йалне тата ытти çĕре те куçараççĕ. Выставкăна çынсем чылай çӳреççĕ.

А. М.

Çĕнĕ кĕпер

ЕЛĔК. Çак кунсенче Ефремкассинчи „Майăн 1-мĕш" колхоз самообложени укçипе çĕнĕ пысăк кĕпер туса пĕтерчĕ. Кĕпер тăвас ĕçре çулйĕр уполномоченнăйĕ Михайлăв тата колхозниксем: Никитин, Т. Лисин, Капитонăв, Гордейĕв йулташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

А. Орлов.

Комсомол уйавĕ тĕлне

ÇĔМĔРЛЕ. Предприйатисенче ĕçлекен комсомолĕцсемпе ĕççамрăкĕсем хушшинче Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнине уйавлама хатĕрленесси саралсах пыраt.

Чылай комсомолĕцсем промфинпланă ытлашшипех тултарма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, брак кăларассине пĕтерме, çĕнĕрен стахановецсем хатĕрлеме пулаççĕ. Акă стоцарнăй потокри мастăр О. Болшакова пĕрремĕш суртлă тавар туса кăларассине 45—50 процентран 85 процента çитиччен ӳстерме, ĕç тухăçлăхне 10 процент ӳстерме, ĕçе кайа йулса тухассине пачах пĕтерме пулаt. Мастăр комсомолĕц Васильĕв, техприйомщик Пименăв йулташсем производствă ĕçне лайăхлатса стахановла йуххăма тытăх та анлăн сарса йама пулчĕç.

Ленинла „Искра"

Вырăс социал-демократийĕ иртнĕ çĕрçуллăхăн 90-мĕш çулĕсенче пысăк йăвăрлăхсем тӳснĕ.

Партин ĕçлекенĕсене полици тытса арĕстленисем нумай пулнă пирки партин паллă ĕçлекенĕсене пурне те пекех тĕрмесене хупса лартнă йе ссылкăна йанă. „Економиссем" тенĕскерсем, рабочисен йухăмне шалтан хавшатнăскерсем, полици хĕсĕрленинчен те ытларах сийен кӳнĕ.

Економиссен пăсăк ĕçĕсене тата полици хĕсĕрленине пула пулса тăнă лару-тăрăва Ленин—„сапаланнисен, уйрăла-уйрăла кайнисен тата пăркаланнисен" тапхăрĕ, тесе йат панă.

Çав вăхăтрах рабочисен стихийлă ӳсе пыракан йухăмне партилĕ çирĕп руководствă, марксист-революционерсен централизацилĕ организацийĕ пит кирлĕ пулнă.

Çавăн пек организацийе часах парти сĕесне пухнипе туса хума май килмен, мĕншĕн тесен идейа тĕлĕшпе сапаланни пит шала кĕрсе кайнă. Сĕеса пухăнса пĕрлешиччен малтан—оппортунисене çĕмĕрсе тăкмала, рабочисен йухăмне йуттинчен пуринчен те уйăрмала пулнă. Организацилĕ пĕрлĕх пултăр тесен, идейлă пĕрлĕхе хатĕрлемеле пулнă.

Ленин, вăл вăхăтра инçетри ссылкăра пулнă çĕрте, малалла геннилĕ курса, социал-демократийĕ идейлă пĕрлештермели план, рабочи класăн партине туса хумалли план хатĕрленĕ.

„Парти пуçланса кайнă тапхăрта, темĕн чухлĕ нумай кружоксене организацисем пĕр йĕрипе çыхăнса тăман чухне, кустарлăхпа кружковщинă партийĕ çӳлтен пуçласа айалла çитиччен сисе тăнă чухне, идейă тĕлĕшпе сапаланни парти ăшĕнчи пурнăçăн тĕп паллн пулса тăнă чухне,—çав тапхăрта сăвчăрти сыпăксенчен тĕп сыпăк, парти умĕнче тăракан задачăсенчен тĕп задачă вăл—пĕтĕм Российăшăн вăрттăн тухса тăракан хаçат кăларма пуçлассн пулнă. Мĕншĕн тесен ун чухнехи условисенче пĕтĕм Российăшăн вăрттăн тухса тăракан хаçат урлă анчах партин темĕн чухлĕ кружоксемпе организацисене пĕрлештерме пултаракан пĕр шухăшлă чăмăрне тума, идейăпа тактикă тĕлĕшĕнчен пĕрлешмели условисене хатĕрлеме, çапла вара, чăн-чăн парти тумали никĕсе хывма май пулнă" (Сталин,—„Ленинисăм ыйтăвĕсем").

Ленин хатĕрленĕ план пĕртен-пĕр пурнăçла план пулнă. Ленин хаçата çавăн пек вырăн пани патша Российĕнчи пĕтĕм лару-тăрăвран тухса тăнă. Хевеланăç Йевропăри ытти кирек те хăш çĕршывра та революцилĕ йухăмăн хăйĕн вăйĕсене организацилеме хаçатсăр пуçне урăх та нумай майсем пулнă. Российăра парламент трибуни те, уççăн ĕçлекен профессилĕ союзсем те, вырăнти самоуправлени те пулман. Вырăс социал-демократин пĕр çул çеç пулнă: вăрттăн тухса тăракан политикăлă оргăн организацилесси. Вăл çеç пĕр-пĕринчен уйрăм темĕн чухлĕ кружоксене пĕр çĕре пĕрлештерекен центр пулма пултарнă. „Економиссене" идейă тĕлĕшпе аркатса тăкас пит пысăк ĕçе тумасăр парти сĕесне пулма май пулман,—çав ĕçе хаçат анчах тума пултарнă.

Çавăнпа ĕнтĕ Ленин ссылкăра пулнă чухне, пĕтĕм вăйă хăватпа çавăн пек оргăна туса хума хатĕрленме тытăннă. Малтан çырусем тăрăх, унтан, ссылкăран хăтăлсан, чылай хуласене хăй кайса, Ленин 1900 çулхине çуркуннепе Псков хулинче хаçат кăларас ыйтупа—хаçачĕ „Искра" йатлă пулмала тунă—канашлу пухнă.

Ленин Плехановпа тата „Освобождение Труда" ушкăнпа пĕр пулса ĕçлеме решени йышăнни пулас оргăншăн пысăк вырăнта тăнă.

Плехановă вăл вăхăтра партири паллă çын пулнă. Унăн авторитечĕ пит пысăк пулнă. Вăл народничествăна хирĕç тата економиссене хирĕç кĕрешсе тава тивĕçлĕ ĕç туниве пурте пĕлсе тăнă. Унпа çывăх пулни Лениншăн политикăлă пысăк оргăна пуçарса йарас задачăна çăмăллатнă. Анчах, Плехановпа пĕрле ĕçлеме тытăнса, Ленин пĕрле ĕçлеме йăвăр пулассине малтанах курнă.

„Епĕр,—тесе çырнă Ленин,—Плехановпа тата „Освобождение Труда" ушкăн пек вăйсемсĕр ĕçе туса пыма пулаt тесе шухăшламастпăр, анчах çавна кура епĕр хамăр харпăрхăй тĕллĕн пулассин пайне те пулин çухататпăр тесе шухăшлама никамăн та права çук". (Ленинский сборник, т. I)

Ленин çавăн пек харпăрхăй тĕллĕн пулассине пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртнĕ. Редакцинче шалта кĕрешсе, йаланах Плехановă революцилĕ туртăмлăк парса пыр а, вăл хаçата парти вăйĕсене пĕр çĕре пухса пĕтĕçтермели хăватлă оруди туса хунă.

Хăй умне социал-демократин сапаланчăк ушкăнĕсене пĕрлештерес тĕп задачă лартса, „Искра" пĕрремĕш номĕртенех економиссене хирĕç, пур тĕрлĕ оппортунисăма хирĕç хăйар кĕрешӳ пуçарса йанă. „Искра" економиссене, либералла народниксене тата есерсене тăрă шыв çине кăларса пынă.

„Кивĕ „Искра" кĕрешни тата Ленинăн „Мĕн тумала?" йатлă кĕнекинче „хвостисăм" („хӳрере пырас") теорине вирлĕн критиклени „економисăм" тенĕскерне çĕмĕрсе тăкнă анчах мар, Российăри рабочи класăн чăн-чăн революцилĕ йухăмĕн теорилĕ никĕсне те хывса панă" (Сталин,—„Ленинисăм ыйтăвĕсем"). Вăл вăхăтра Хĕвеланăç Йевропăри социал-демократла партисенче ревизионисăм пит анлăн сарăлса кайнă,—економиссем сарнă шухăшсем—Российăри условири ревизионисăм пулнă.

„Англичан фабианецсем, француз министериалистсем, нимĕç бернштейнианецсем,—тесе çырнă Ленин,—вĕсем пурте пĕр çемйе, вĕсем пурте пĕр-пĕрне мухтаççĕ, пĕр-пĕринчен вĕренеççĕ тата пурте пĕр пулса „догматла" марксисăма хирĕç тăраççĕ". (Ленин, т. IV).

Çапла вара Ленин оппортуниссене хирĕç кĕрешни—оппортунисăма хирĕç пĕтĕм тĕнчипех кĕрешни пулса кайнă. „Искра" пĕтĕм тĕнчери рабочисен йухăмĕнче пур тĕрлĕ оппортунисăма та хирĕç хăватлăн кĕрешнĕ пĕртен-пĕр хаçат пулнă.

„Кивĕ „Искра" хисеплеме тивĕçлĕскер пулчĕ, вăл—ăна вырăс оппортуниссем тата Хĕвеланăç Йевропăри оппортуниссем йуратман-и" (Ленин, т. VI).

„Искра" страницисенче Ленин пролетариат кĕрешĕвĕн теорилĕ тата тактикăлă чи пысăк проблемисене хатĕрленĕ. „1905—1907 тата 1917—1920 çулсенче çавсемшĕн массăсем хĕçпăшалпа кĕрешнĕ пур ыйтусене те, пуçламĕш формине, унчухнехи пичет тăрăх сăнама пулаt (сăнамала та)" (Ленин, т. XXV). Пролетариат хăй пĕччен йертсе пырас идейă, пролетариат диктатуришĕн кĕрешес идейă—„Искра" туса пынă пĕтĕм ĕçсен никĕсĕнче пулнă.

Ленин „Искрара" хресченсен—пролетариат союзникĕн—ролĕне сарлакан кăтартса панă.

„Искра" парти программине туса хатĕрленĕ, ку программă никĕсĕ çинче вырăнсенчи социал-демократла организацисем пĕрлешнĕ,—çакă вăл „Искра" тунă тава тивĕçлĕ пит пысăк ĕç пулса тăраt. Ку программă социал-демократсен унчченхи программисенчен тĕпренех ăрасна пулнă. II-мĕш Интернационалри нихăш партин программинче те пролетариат диктатури çинчен ыйту лартман. Вĕсен программисенче пролетариатăн союзникĕсем çинчен нимĕн те каламан аграрлă требованийĕсен пайĕ те пулман. Редакцинче пит пысăк кĕрешӳ туса,—çав кĕрешӳ редакцинче раскол пуласси патнех çитмеле çивĕч формăсемпе пулса пынă,—Ленин çĕнĕ сăнарлă парти программин революцилĕ проектне хатĕрленĕ.

Анчах „Искра" ĕçĕсем хаçат кăларни çеç пулман, идеологилĕ ыйтусене сӳтсе-йавса хатĕрлени çеç пулйан. „Искра" часах вырăнсенчи ушкăнсене тата унăн агентĕсене тăрăх партилĕ ĕçсене туса пынă профессилĕ революцилĕ нумай агентсене йертсе пыракан организацилĕ центр пулса тăнă. Российăри революцилĕ ĕçсене йертсе пырасси, вырăс практикине йертсе пырасси пĕтĕмпех Ленин аллинче пулнă.

„Искра" редакци почтин пĕр пайĕ çеç хаçат материалĕсемпе çыхăнса тăнă. Вĕсем пуринчен ытла партилĕ ĕçĕн практикăла ыйтăвĕсем çинчен çырнă çырусем пулнă. Редакци секретарĕ Надежда Константиновнă Крупская çырнă çырусен хисепĕнче тем тĕрли те пулнă: пĕр-пĕр агента çав-çав вырăнсенче пулма сĕнни те, кивĕ шифăра пăрахаçа кăларни çинчен пĕлтерни те, хăй çинчен нумай вăхăт хушши пĕлтермен работник ăçти çинчен ыйтни те, пĕр-пĕр комитет çине мĕнле пăхмали çинчен панă кăтарту та тата ыттисем те пит нумай—„44 çулти сарă хĕрарăм валли лайăх паспăрт" тупса пама ыйтни те пулнă.

Çав çырусене пурне те шифăрласа йанă, вĕсем вăйăта пит нумай илнĕ, çырусене калама çук вăрттăн çӳретмеле килнĕ.

Партийе „Искра" тавра пĕтĕçтерес тĕлĕшпе ĕçлесе, Ленин пит ырă большевиксене, профессилĕ революционерсене, пролетариат ĕçĕшĕн хăйсене хăйсем шеллемесĕр кĕрешекенсене воспитани парса, хăй тавра пухса пынă. Вĕсем вырăнсенчи организацисене кĕрешсе илес тĕлĕшпе, Ленинăн идейисене сарса практикăлă пит пысăк ĕçсем туса пынă.

„Искра" хаçатăн çавăн пек паллă агенчĕсенчен пĕри Ладо Кецховели пулнă. 1900 çултан пуçласа, Сталин йулташ хушнипе, Ладо Кецховели Бакура ĕçлет. Унăн Бакури социал-демократсен организацине ленинла-искрăла çул çине тăратмала тата Бакура вăрттăн типографи организацилемеле пулнă. Ладо Кецховели ăнăçтлĕ

(Йулашки 4-мĕш страницăра)

Чукунçул строительстви

Тăван çĕршыва çĕнĕ чукунçулпа парнелер

(Комсомолĕцсен çырăвĕ)

Епĕр, Канаш — Шупашкар чукунçул строительствинче лини çерçинă çĕрте ĕçлекен комсомолĕцсем, халĕ лини çине хăйăр сарнă çĕрте ĕçлетпĕр. Ийуњ уйăх пуçламĕшĕнче епĕр хамăр çине чукунçула август уйăхĕ тĕлне ĕçе кĕртме обйазательства илтĕмĕр. Строительствăра çирĕп йĕрке, ĕç вăйĕ çителĕклĕ организациленĕ пулсан, вăл обйазательствăна пурнăçа кĕртме пысăк майсем пулнă. Анчах чукунçул строительстви руководителĕсем ўрĕк-сўрĕк ĕçленĕ, çавнашкалах районри партипе совет организацийĕсем ĕç вăйĕ парас тĕлĕшпе начар пулăшнă пирки, обйазательствă пурнăçа кĕмесĕр йулчĕ. Ку пире хытă пăшăрхантарать.

ССРС Çулйĕр Халăх Комиссарĕ Л. М. Каганович йулташ панă приказ тăрăх чукунçула ĕçе кĕртмели срук — çенťаберĕн 1-мĕшĕ. Епĕр, 3-мĕш участкăри стахановецсем, приказа сўтсе-йавнă хыççăн бригадăпа бригадă, комсомолĕцпа комсомолĕц хушшинче социалисăмлă ăмăрту догаварĕсем туса, кашни хăйĕн ĕç нормине 150—175 процентран кайа мар тултарса пыма пултăмăр.

Строительствăна ĕç вăйĕ кирлĕ. Канаш, Шăхасан, Трак, Çĕрпў тата ытти районсенчи партипе совет организацисем ку йенĕпе начар пулăшаççĕ. Колхозниксене строительствăна организацилес йенĕпе мĕн чухлĕ те пулин палăрмалăх ĕç туни курăнмасть-ха. Ĕç вăйĕ хăй тĕллĕн пухăнасси çине кăна шанса лараççĕ. Ĕçе каплипех хăварма никамăн та, нимĕнле сăлтав та çук. Халех строительствăна ĕç вăйĕ çителĕклĕ памала.

Епĕр, строительствăри комсомолĕц-стахановецсем, чукунçула кĕске срукра туса пĕтерсе ĕçе кĕртмелле тумашкăн колхозниксене чукунçул çине массăлăн ĕçлеме тухма чĕнетпĕр. Комсомол организацисен ку ĕçре тивĕçлĕ вырăн йышăнмала. Вĕсен колхоз уйхирĕсенче стахановла ĕçлекен комсомолĕцсене строительствăра ĕçлеме организацилемеле. Комсомолĕцсем умĕнче тăракан хисеплĕ задачă, вăл — Ленинла—Сталинла комсомол 20 çул тултарнине чукунçулпе кĕтсе илмелле тăвасси. Епĕр, строительствăри комсомолĕцсем, хамăр уйава хĕрўллĕн хатĕрленме тытăнтăмăр. Кашни комсомолĕц комсомол 20 çул тултарнине нормăна 150—175 процентран кайа мар тултарнипе кĕтсе илессишĕн тăрăшатпăр.

Комсомолĕцсем, çамрăксем, тухăр чукунçул строительствинче ĕçлеме! Пурте пĕр хаваслăхпа стахановла ĕçлесе çенťаберĕн 1-мĕшĕччен тăван çĕршыва çĕнĕ чукунçулпа парнелемеле тăвар!

Строительствăри комсомолĕц-стахановецсем: С. Тарасăв, Л. Максимăв, Колбасăв, Рубцовă, Васильйĕвă, Йевдокимăв, Йемелйанăв, Тимофейĕв, Дмитрийĕв, Пушков.

Нормăна иртерсе

Ийуњ уйăхĕччен Канашри депори машиниссенчен йăвăр пуйăссем илсе çўрекенсем сахал пулнă. Чукунçул çинче ĕçлекенсен Пĕтĕм Сойузри куннне хатĕрленнĕ май машиниссем хăйсен умне йăвăр пуйăссем илсе çўретессине алла илес задачă лартнă. Хĕрўллĕ ĕç çакăнтан пуçланнă. Машиниссем, кочегарсем, кондуктăрсем пĕр-пĕринне социалисăмлă ăмăртăва тухса уйава ўсĕмсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешме тытăннă.

Вăхăт нумай та иртмен, машиниссем пысăк ўсĕмсем тума тытăннă. Машинист Тйажĕв ийулĕн 13-мĕшĕнче Çĕмĕрле станцине 1910 тоннăлă (нормă 1800 тоннă) состав илсе çитерсе, йăвăр пуйăссем илсе çўреме пысăк майсем пуррине кăтартса пачĕ. Ун хыççăн, ийулĕн 16-мĕшĕнче Звездин машинист 1860 тоннă турттарса тухрĕ.

Воронцов машинист ийулĕн 20-мĕшĕнче Çĕмĕрлене 2000 тоннăлă состав (нормă 1800) кайала 1824 тоннăлă состав (нормă 1600 тоннă) илсе тухса рекордлă ўсĕм тунă. Воронцов тунă ўсĕмĕн пахалăхĕ вăл—çав йăвăр составсене ку таранччен йапăх шутра пулнă 5155-мĕш №-лĕ паравозпа турттарса тухниче. Ĕç çапла пулнă: чукунçул работникĕсен уйавне хатĕрленме тытăнсан хĕрарăмсем пĕр паравоза шефа илнĕ. Вĕсем вăл паравоза тасатса йĕркене кĕртнĕ, куллен тĕрĕслесе пырса лайăх йусанă. Вара çак паравоз лайăхскер пулса тăнă.

Халĕ депо коллективĕ Çĕмĕрле йеннеле 2000 тоннăлă состав кайала 1800 тоннăлă состав илсе çўрессине йаланхи нормă тума йышăнчĕ. Пирĕншĕн ку нормă та чикĕ мар, теççĕ машиниссем.

(Хамăр информаци).

Тирпейлĕх, тасалăх кирлĕ

Шупашкарти макарон хапрăкĕ ĕççыннисене валљи куллен кирлĕ продуктăсем кăларать. Кунта вара тирпейлĕх, тасалăх ниçтинчен те ытларах кирлĕ.

Анчах макарон хапрăкĕнче тирпейлĕхпе тасалăх сахал-ха. Вăл хапрăк килкартине кĕрсенех курăнать. Çуртсем умĕнче тислĕк купаланса выртать. Пушартан сыхланас тĕлĕшпе лартнă каткасенчи шыв час улăштарса тăмая пирки шăршланса кайнă. Макарон тултармали йешчĕксем тăвакан цехра та тирпейлĕх çук. Унта йешчĕксене кив йешчĕк хăмисенчен тăваççĕ. Ку тасалăх йĕркисене пăсни пулать. Кивĕ хăмасенчен тунă йешчĕксене тултарнă макарон часах пăсăлать. Унашкал пулни пĕр хут çеç пулман, анчах хапрăк руководителĕсем вăл ĕç çине килĕшўллĕн пăхаççĕ. Склад çурчĕ çине витнĕ хăмасем çĕрсе кайнипе продуктăсем çăмăр çусанах йĕпенеççĕ. Урайсене пачах çумаççĕ.

Складсенче çеç мар, ĕçре те тирпейлĕх çук. Макарон кăларакан цехра ĕçлекен рабочисем тасалăх йĕркисене лайăх пĕлмеççĕ. Ĕçлесе тухнă хыççăн рабочисене çăвăнмалисем çителĕксĕр.

Н. Йадровкин.

Совет Сойузĕн хулисем тăрăх.
ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Уралти (Свердловск хули) Серго Орджоникидзе йачĕпе тăракан машиностройени савăчĕн çурчĕсем.
В. Носков фото-ўкерчĕкĕ (Сойузфото).

Депутат сĕнĕвĕсем

Ийулĕн 28-мĕшĕнче каçхине ЧАССР Осоавиахим Тĕп Советне Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ Клавдийă Родионăвнă Йевдокимăвă йулташ пырса курчĕ.

Йевдокимăвă йулташ „Память Ленина" колхозра (Шупашкар-р.) хăй мĕнле ĕçлени çинчен каласа пачĕ. Вăл 1932 çултанпа колхозра пахча-çимĕç лартса тăвакан бригадăн бригадирĕ пулса ĕçлет. Йевдокимăвă йулташ бригадинче 19 хĕрарăм ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен бригадирĕ Клавдийă Родионăвнă Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне суйланма тивĕçлĕ пулнăшăн мухтанаççĕ.

— Епĕр,—тет Йевдокимăвă йулташ,—пуйан та културăлă пурăнатпăр. Кашни колхозник килĕнче радио пур, Илйич лампи çутатать, колхозăн хăйĕн електростанци ĕçлет. Шкулсене, лаша витисене електричествă кĕртнĕ. Колхозра ĕне усраман хуçалăхсем тахçантанпах çук ĕнтĕ. Çакăн пек телейлĕ те хаваслă пурнăçшăн епĕр хамăрăн партине, Совет правительствине тата етемлĕхĕн чи лайăх тусне, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аппăшне тата учителне Сталин йулташа тав тăватпăр.

Капиталисăмлă йĕри-тавралăх çинчен пирĕн нихăçан та манма йурамасть, пирĕн аслăран та аслă çĕнсе илнисем çине—ĕçлев, канăç, вĕренў прави çине, пирĕн телейлĕ те савăнăçлă пурнăç çине капиталиссем тапăнас хăрушлăх умĕнче йаланах мобилизацилĕ хатĕр тăмала.

Анчах хаљхи вăхăтра Осоавиахим начар ĕçлет-ха. Осоавиахимăн Шупашкар райсовечĕ оборонă ĕçне кирлĕ пек йĕртсе пымасть. Пирĕн колхозниксем тата манăн бригадăри колхозницăсем те колхозра Осоавиахим ĕçне вăйлатма ыйтаççĕ. Вĕсем мирлĕ вăхăтра çар ĕçне вĕренесшĕн, колхоз производствинче кăна мар, пире хирĕç фашиссем вăрçă пуçласан мĕн пулсан, вăрçăра та ударник пулма, алла хĕçпăшал тытса тăшмана вилĕм тивмелех çĕмĕрсе тăкма хатĕр тăрасшĕн кĕрешеççĕ.

Пирĕн колхозра хаљхи вăхăтра Осоавиахим организаци çук. Ейĕ пуçламĕш организаци уçма ыйтатпăр. Кашни колхозник çар ĕçне вĕренме пултартăр.

Сисĕмлĕ часовой Лебĕдĕв

(Красноармейĕц çырăвĕ)

Чăваш республикĕнчен килнĕ красноармейĕц Лебĕдĕв йулташ пĕр каçхине постра тăнă. Çĕрле. Вăхăт 10 сехет çине кайнă. Çанталăк уйăр мар. Йĕри-тавралăха хура çăмăр пĕлĕчĕсем хупăрласа илчĕç.

Çăмăр шăпăртатса çунă хушăрăх çын утнă сасă илтĕнчĕ. Вăл пост патнелех пырать. Часовой тăнă çĕреле нўрĕ çĕр çийĕпе утса пыраканăн ура сасси лайăхах илтĕнме пуçларĕ. Çав самантрах красноармейĕц умне çын ĕмĕлки тухса тăчĕ. Лебĕдĕв:

— Стой! Кто идет?—тесе сасă пачĕ.

Паллă мар çын хытăрах утма пуçларĕ. Часовой сывлăшала винтовкăран асăрхаттармала печĕ. Çын лапах пост патнех çывхарса пырать. Часовой чупакансккерне тĕллесе печĕ.

Ку çын—паллă шпион пулнă.

Лебĕдĕв канавра хура тĕслĕн курăнса выртакан йапала пуррине асăрхарĕ. Лебĕдĕв хăвăрттăн канава сикрĕ, хăйĕн умĕнче пысăк сарлака сăран сумкă курчĕ. Ним пăхса тăмасăрах боец ăна караул начаљникĕ патне илсе кайрĕ.

Сумкăна тĕплĕн тĕрĕсленĕ хыççăн, унта 3 пин тенкĕ укçа пурри палăрчĕ. Çак сумкă шпионăн пулнă мĕн.

Сисĕмлĕ часовой Лебĕдĕва çарри приказпа благодарность панă тата укçапа награделанă.

Красноармейĕц П. Йакăвлĕв.
Инçет-Хĕвелтухăç.

Курс уçăлнă

Чăваш республикĕн Социаллă обеспечени Халăх Комиссариачĕ районсенчи социаллă обеспечени пайĕсен пуçлăхсен тата инспектăрсен квалификацине хăпартас шутпа пĕр уйăхлăх курс уçнă.

Кĕркунне комиссариат Шупашкарта тата тепĕр курс усать. Вăл курсра районсенчи социалла обеспечени пайĕсем валљи шут ĕç работникĕсем вĕрентсе хатĕрлемеле.

Ленинла „Искра"

(Йулашки)

мели машин, шрифт, хут тата краскă чылай тупнă. Вăл Ленинпа çыхăннă та, вăл хушнипе, „Искра" хаçата тата „Искра" изданисене çĕнĕрен пичетлесе кăларнă. Жандармери Ладо Кецховелине тытма тем пекех тăрăшсан та тытайман. Жандармерин Тифлисри управлени начаљникĕн ирĕксĕрех çакăн пек каламала килнĕ: „прокламацисене пурне те, грузинсен иртнĕ çул вĕçĕнче вăрттăн тухма пуçланă „Брдзола" („Борьба") йатлă журнале, çитменне „Искра" хаçата та Баку хулинчех пичетлеççĕ..." Анчах „вăрттăн типографи Бакура ăçта вырнаçнă тесе ыйтас пулсан, çавăн çинчен нимĕн те шантарса калама çук-ха". Кецховели талăкĕ талăкĕпе типографирен тухмасăр уйăхĕ-уйăхĕпе ĕçленĕ. Вăл хăйех наборщик, печатник, корректор, редактăр пулнă, пысăк та хăрушă ĕçе хăйне хĕрхенмесĕр туса пынă.

Ладо Кецховели хăйĕн пурнăçĕн йулашки минучĕ çитиччĕнех самодержавине хирĕç кĕрешнĕ; ăна Тифлисри тĕрмене хупса лартсан та вăл кĕрешме пăрахман. 1903 çулти августăн 17-мĕшĕнче Ладо Кецховелине хăйне хупса лартнă камерăрах вĕлернĕ. Уйăн пурнăçĕ кĕске, анчах калама çук çутă пулнă; Ладо Кецховели пурнăçĕ — Ленин тата Сталин нимрен хăраман профессиллĕ революцинерĕсене, парти ĕçĕшĕн хăйсен пурнăçне пама хатĕр çынсене вĕрентсе ўстернине кăтартса тăрать.

„Искра" хаçатăн пирвайхи организатăрĕсенчен пĕри Ленинăн шанчăклă тусĕ тата ученикĕ патша палачĕсем 1905 çулта вĕлернĕ Иван Васильйевич Бабушкин пулнă. Ленин Иван Васильйевич Бабушкина пир-авăр промышленнă çĕн центрĕсене йанă,—унти организацисем пит хăвăрт „Искра" майлă çаврăннă.

Бабушкин пулăшнипе „Искра" Петербургри организацийе те, унта економиссем уйрăмах вăйлă пулнă пулин те, хăй майлă çаврăнă.

Çавăн пек ытарайми ырă çынсем урлă Ленин рабочисемпе, парти вырăнсенчи работникĕсемпе çыхăннă.

Ленин рабочисен çырăвĕсене тимлĕн вуланă, вĕсене—„пичетлесе кăларма çеç мар, ахаљ те, пĕрпĕрин шухăшĕсене пĕлсе тăма, пĕрпĕринпе çыхăну ан сухалтăр тесе тата пĕрне-пĕри йăланмала пултăр тесе" (Ленин, т. XXVIII) çырса тăма ыйтнă. Пролетариатăн кĕрешĕвĕпе уйрăлми çыхăнса тăнă,—çакă пулнă ленинла хаçатăн уйрăмлăхĕ.

„Искра" йаланах малта пыракан рабочисене хумхантаракан ыйтусем çинчен, революциллĕ йухăм мĕнпе пурăнать—çавсем çинчен çырса тăнă. Рабочисем хăйсен хаçатне пит хакла хунă. Вĕсем нумай çырусенче „Искра"-на „пĕтĕм вырăссен пуссемпе хаклама çук, сехетсемпе виçме çук ĕçĕ çинчен" çырнăшăн, „мĕнле пурăнмалине" вĕрентнĕшĕн тавтунă. „Халĕ ĕнтĕ пире кассăсем мар, кружоксем мар кирлĕ... халĕ ĕнтĕ çапăçăва кайиччен çинчен, çапăçура мĕнле кĕрешмели çинчен çеç вĕрент" тесе çырнă рабочисем.

Малта пыракан рабочисене хăй тавра пĕтĕçтерсе, „Искра" вырăнти пĕр комитет хыççăн теприне хăй тавра çавăрса, вĕсенчен економиссене кăларса сирпĕтсе пынă. Çавна йăвăр кĕрешўре, çине тăрса ĕçлесе туса пымала килнĕ. Кавказра Ленин шухăшĕсене сарас тĕлĕшпе Сталин, Пулукидзе тата Кецховели пит пысăк ĕçсем тунă. Вĕсем хăйсен вăрттăн пичетне тунă. 1901 çулти нойаберте РСДРП Тифлисри ленинла-искрăла комитетне организациленĕ. Сталин йертсе пынă „Брдзола" хаçат Ленин шухăшĕсене пит тĕрĕс пропагандăланă тата грузин „легаллĕ марксистсене", економиссене, националиссене хирĕç хайарран кĕрешнĕ.

1901 çул вĕçĕнчен пуçласа „Искра" хаçатăн кашни номĕрĕнче пекех тĕрлĕрен комитетсем: „Искра" программине пĕтĕмĕшпех йышăнатпăр, ăна хамăрăн йертсе пыракан оргăн шутлатпăр, хамăрăн хаçат тесе, ăна укçапа пулăшатпăр, редакци туса иртерекен пĕтĕм ĕççенче пулăшса пыма пулатпăр, тесе пĕлтернисене пичетлесе пынă.

„Искра" рабочисен йухăмне идейăлă хавхалантарса пынă çеç мар, вăл хăйĕн йалавĕ тавра пит нумай кружоксене пĕтĕçтернĕ, Российри пĕтĕм революциллĕ ĕçе йертсе пыракан пĕртен-пĕр центр пулнă.

Анчах „Искра" парти сĕсне пухма пĕрмайах хатĕрленнĕ, редакции пĕрремĕш зайавленийĕнчех сĕсе пухас задачăна çырса хунă пулин те, ăна пухма васкаман. „Епĕр шăп та шайах çакна асра тытса ĕçлерĕмĕр: çичĕ хут виç, пĕрре кас" (Ленин, т. VI), мĕншĕн тесен çавăн пек тĕплĕн хатĕрленмесĕр сĕес хăйĕн ĕçне тума—„Искра" туса хатĕрленисене çирĕплетсе хăварма пултарайман.

„Сĕесăн тĕп задачи мĕнре пулнă-ха?—тесе çырнă Ленин.—„Искра" палăртнă, сўтсе йавса хатĕрленĕ принциплă тата организацилĕ никĕссем çинче чăн-чăн парти туса хурасси пулнă" (Ленин, т. VI).

Сĕес улшăну вăхăтĕнче, парти умĕнче çĕнĕ, пысăк задачăсем тăнă вăхăтра пухăннă.

„Çав тапхăр вăл парти либералсемпе килĕшў тытассинчен либераллă буржуазие хирĕç виллĕмле кĕрешессе патне çаврăннă, патша йĕркинĕ хирĕç кĕрешме хатĕрленессинчен ăна хирĕç уçăн—патша йĕркине тата феодалисăма пĕтĕмпех аркатса тăкма—кĕрешме тытăннă тапхăр пулнă,—тесе каланă Сталин йулташ партин XV-мĕш сĕесĕнче.—Парти пуçĕнче вăл вăхăтра ултă çын тăнă: Плеханăв, Засулич, Мартăв, Ленин, Аксељрод, Потресăв. Çаврăну çав ултă çынран пиллĕкĕшин пуçне çинĕ. Вĕсем урапа çинчен тухса ўкнĕ. Ленин пĕр пĕччен йулнă".

Бољшевисăмăн усал тăшманĕ Троцкий, Мартăвпа тата ытти меншевиксемпе пĕрле, „Искра" редакторне Ленина тискерле тулама тытăннă, Ленин шухăшĕсене саракан хаçата хирĕç кампани пуçласа йанă. Анчах вĕсен „Искра" туса иртернĕ историлĕ ĕçе сирсе пăрахма вăй пулман. Вырăс социал-демократсен йышăнăрах пайĕ Ленин хыççăн пынă.

Ленинла пăла çĕнтерни „пĕтĕçўлĕ те пиçĕхнĕ, унпа тенине тĕпчче урăх пĕлмен коммунисла партин никĕсне хывнă". (Сталин).

Б. Лейбзон.

Çĕнĕ магазинсем уçăлаççĕ

Хаљхи вăхăтра пирĕн республикăра вунă районра пысăк магазинсем ĕçлеççĕ. Виççĕмĕш кварталта республикăра тата виçĕ районра—Кувакинăра, Тăвайра тата Тракра уçма палăртнă.

Районри магазинсемсĕр пуçне, виççĕмĕш кварталта 10 районра хуçалăх таварĕсем çутакан магазинсем уçма палăртнă. Вăл магазинсем: Куславккара, Сентĕрвăрринче, Патăрйеленче, Ман-Сĕнтĕрте, Пăрачкавра, Йетĕрнере, Çĕрпўре, Вăрмарта тата ыт. уçăлмала. Хуçалăх таварĕсем сутакан магазинсем халĕ пĕр район центрĕнче те çук ха.

Йанăша тўрлетни

„Чăваш Коммунĕн" 1937 çулхи октаберен 11-мĕшĕнче тухнă номĕрĕнче Леонид Агакăв пирки халăх тăшманĕ тесе çырни тĕрĕс мар.

Пулни-иртнисем

Ийулĕн 23-че П. А. Çилвестрăв Шупашкарти милици тытăмне пырса паспăрт сухатни çинчен пĕлтернĕ. Тĕрĕслесе пăхсан, вăл нимĕнле паспăрт та сухатманни паларнă. Зеленодољск хулинче (Тутар АССР) ĕçленĕ чухне вăл растрăтă тунă пулнă, çавна пытарас тесе вăл Шупашкара киле, йут документсемпе пурăннă.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

Çĕмĕрлери йăвăç каскалакан комбинатăн

ХАПРĂК-САВĂТ ШКУЛĔ

1938—39 вĕренў çулĕнче вĕренекенсене илесси çинчен

ПĔЛТЕРЕТ

Шкулта çак уйрăмсем пур: 1) станочниксен тата 2) стољарсен — сборщиксен. Вĕренмели срук 1 çул.

Шкула 16 çулхисенчен пуçласа 19 çулхисем таран çичĕ çуллă шкул пĕтернисене илеççĕ.

Зайавленисене çенťаберĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Зайавленипе пĕрле çак документсем кирлĕ: хăш çулта çуралнине кăтартакан свидетельствă, вĕренни çинчен свидетельствă, сывлăх пирки справкă.

Вĕренме кĕнĕ чух вырăс чĕлхипе, математикăпа, обществоведенипе тата географипе испытани тăваççĕ.

Шкула илнисене валљи общежити пур, выртса тăмали йапаласем параççĕ тата вĕреннине кура стипенди.

Дирекци.

2—2

Йалхуçалăх снабженин Чăваш республикĕнчи кантурĕ

хăйĕн склачĕсенче сутлăх тытать:

Клевĕр суртламали машинăсем, „Кускута" пĕтĕмпе 13.

Канашра	6	Вăрнарта	2
Улатăрта	4	Вăрмарта	1

Курăк акмали лашалă машинăсем „САККО" пĕтĕмпе—31.

Канашра	11	Вăрмарта	4
Улатăрта	9	Вăрнарта	4
Хĕрлĕ Чутайра	3		

Алăпа акмалисем „Кроуна" пĕтĕмпе—33

Канашра	5	Улатăрта	10
Çĕмĕрлере	9	Вăрмарта	9

Çилос турамалли машинăсем 14—универсал.

„Папек" Патăрйеленче—4.

„Интернационал. Вăрнарта—1.

Улăм турамалисем „4" маркăлисем пур складсенче те пур, пĕтĕмпе алăпа ĕçлемелисем—88

„С" маркăлă, лашалисем 210.

Алăпа ĕçлемелисем Петуховăн Канашра 12.

Вăрлăхсене протравит тумалли машинăсем „Идеал" маркăлă пĕтĕмпе 200, хакĕ 169 тенкĕ.

Кантăр тылламалисем 28, хакĕ 600 тенкĕ, йĕтĕн тылламалисем „6—в"—9, хакĕ 950 тенкĕ. Йĕтĕн тылламали Антонăвăн 8, хакĕ 2500 тенкĕ.

Техникăлă културăсене ĕçлемели машинăсен хакĕсене кăçалхи ийулĕн 1-мĕшĕнчен 50 процент йўнетнĕ. Çавнашкалах складсенче минераллă удобренисем тата тĕрлĕрен протравит тумали химиллĕ йапаласем çителĕклĕ пур.

Йалхуçалăх снабженин Чăваш республикĕнчи кантурĕ.

Чăвашсен Тĕп Аероклубне

ВĔРЕНМЕ КĔМЕ ЗАЙАВЛЕНИСЕМ ИЛЕÇÇĔ

Чăвашсен Љэпидевский йачĕпе тăракан Тĕп Аероклубĕ 2 çул вĕренмели пилотсен тата авиомоториссен уйрăмĕсене татах курсантсем илет.

Вĕренесси производствăран уйăрăлмасăр ирхине тата каçхине вĕренмеле.

Вĕренме кĕрекенсен—1) çирĕп сывлăхлă, 2) 16 çултан пуçласа 22 çулхи таран, 3) пилотсен уйрăмне кĕме 7 çултан кайа мар, авиомоториссен уйрăмне кĕме 6 çултан кайа мар вĕренни пулмалла.

Вĕренме кĕрес текенсен Аероклуб штабне çак документсене тăратмала:

1. Зайавлени.
2. Тĕплĕн çырнă автобиографи.
3. Вĕренни çинчен справкă.
4. Мĕнле сийрен тухни çинчен справкă.
5. Икĕ фотоўкерчĕк 9х12 сентиметр виçепе.
6. Совет, парти тата общественнăй организацисем панă характеристикă.

Аероклуба вĕренме илекен комиссии поликлиникăра кашни уйăхра 9-мĕш тата 21-мĕш числисенче ирхине 10 сехетрен пуçласа кăнтăрла 2-сехетчен ĕçлет.

Районсенчен килекенсене Аероклуб хватерсем памасть.

Аероклуб штабĕ.

Сойузоргучетăн

Вĕренў-Учот-Економикă Комбиначĕн

Чăваш республикĕнчи филиалĕ
Шупашкарта пурăнакан гражданăсене

Курссене çак группăсем тăрăх йышăнать

Счетоводсен (9 уйăхлăх курс).
Бухгалтĕрсен (14 уйăхлăх курс).

Курс пĕтернисене учреждениссенче тата предприятисенче вырăн йышăнма права паракан квалификацилĕ свидетельству параççĕ.

Вĕренесси тўлевлĕ.

Каçхине производствăран уйрăлмасăр вĕренмеле.

Зайавленисене августăн 23-мĕшĕччен йышăнаççĕ.
Занятисем çенťаберĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.
Справкăсене кашни кунах филиал çуртĕнче пама пулать.

Адрĕс: гор. Чебоксары, ул. Канашская, 18, с 10 до 16,5 часов ежедневно, кроме общих выходных дней.

3—1

Уполномоченный Чувашглавлита № 466.

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 663.